Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 8 ТУНТИКУН 181 (4994) №

ÇĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары ул. Володарского 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—56, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 0—23

Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçа чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр. СТАЛИН.

ПСК(б)П Чăваш Обком бўровĕ 1938 çулти майăн 9-мĕшĕнче суту-илў пирки йышăнна решенийе мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обком бўровĕ 1938 çулти ийулĕн 28-мĕшĕнче йышăнна постановлени

ПСК(б)П Обком бўровĕ çак çулти майăн 9-мĕшĕнче йышăнна решенийе суту-илў организацийĕсем, райĕçтăвкомсем тата ПСК(б)П райкомĕсем пит вăрахăн пурнăçа кĕртнине палăртас. Суту-илў Халăх Комиссариачĕ, Чăвашпотребсойуз, Чăвашторг ПСК(б)П Обкомĕн решенине пурнăçа кĕртме тумали ĕçсене пурне те туман, татăклă ĕçсем тума палăртса хуман, хăйсене вађђи пур вывăдсене те туман, ПСК(б)П Обкомĕн асăннă решенийĕнчен тивĕçлĕ уроксене илмен. Асăннă решенийе йышăннăранпа çителĕклĕх вăхăт иртнĕ пулин те, суту-илў ĕçне лайăхлатса йарасси йапăх пулса пырать. Решенире кăтартса панă чир-чĕрсем халĕ те пур. Сăмахран, халĕ те таварсене складсенчен суту-илў вырăнĕсене çитерес ĕçе йĕркелесĕ йаман; куллен кирлĕ таварсемпе суту-илў тума чарăннисем пулаççĕ; финанс хуçалăхне сыватса йарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çав вăхăтрах тавар сутса пухăнакан укçана Госбанка памасăр расхутланисем пулаççĕ.

Суту-илў Халăх Комиссариачĕпе Чăвашпотребсойув промтаварсене йалпо уйрăмĕсене çитерес ĕçе оперативлă йĕртсе пымаççĕ. ПСК(б)П Обкомĕ Заготзерно базисенче çăнăх запасĕ чакмала мар тума йышăнна решенийе Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ Митков йулташ ăнланса илмен, пурнăçа кĕртмен, çавна пула паха суртлă çăкăр-булкăсемпе суту-илў тăвасси пурнăçа кĕмест. Йуçтици Халăх Комиссариачĕпе Прокуратурă дебиторсенчен тата растратăсене шыраса илес тĕлĕшпе судпа следстви органĕсен ĕçĕсене нимĕн чухлĕ те лайăхлатман-ха. Суту-илў Халăх Комиссариачĕ, Чăвашпотребсойуз, ПСК(б)П райкомĕсем тата ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ прилавкă работникĕсем хушшинче политикăлă ĕçсене сарса йарас, стахановла йухăма сарса пырас тĕлĕшпе ПСК(б)П Обкомĕн решенине пурнăçа кĕртмен, çавăн пекех тата чылай райкомсем ПСК(б)П Обкомĕ райĕçтăвкомсен суту-илў пайĕсене, райпотребсойузсене, йалпосене тата торг отделенисене кадрсемпе çирĕплетме хушнине пурнăçа кĕртмен.

ПСК(б)П Обком бўровĕ çапла йышăнать:

1. Суту-илў организацисене тĕрлĕрен таварсене ваккăн суту-илў тăвакан вырăнсене тăтăксăр кўрсе тăма хушас. Складсенче тавар ытлашши пухăнса выртнине хирĕç кĕрешмеле, çав вăхăтрах тавар йăпăсĕ нормăран сахал пулма памала мар.

2. План тăрăх сутакан 6 промтавара потребкооперацие виççĕмĕш квартăлта иккĕмĕш квартăлтинчен икĕ хута йахăн нумайрах памала тунă май, Суту-илў Халăх Комиссариачĕпе Чăвашпотребсойува вăл таварсене суту-илў вырăнĕсене, пуринчен ытла йалпо уйрăмĕсене вăхăтра илсе çитернине çирĕп контроль туса тăма хушас.

3. Чăвашпотребсойуза (Ларионăв й.), Чăвашторга (Тагачин й.), Вăрманпродторга (Федăрăв й.) çак ĕçсене тума хушас: а) пахча-çимĕçсемпе тата фруктсемпе суту-илў тăвассине анлăн организацилемеле, çавсене хĕллехи вăхăта вађђи çителĕклĕ йышăнмала тата хатĕрлесе хумала; б) суту-илў çурчĕсене çак çулти августпа çĕнтăбĕр уйăхĕсенче, ремонт туса, хĕллехи вăхăтра суту-илў тума пĕтĕмпех хатĕрлесе çитермеле.

4. Госбанк управђайушчине Орепин йулташа контроль туса, суту-илўре пухăнакан укçана Госбанка памасăр расхутланине хирĕç çирĕп кĕрешме хушас.

5. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйне Митков йулташа суту-илў вырăнĕсене паха суртлă çăнăх—кирлĕ пек суртлисене—пĕр татăксăр парса тăмала тума хушас.

6. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне суту-илў организацисенчи растратăсемпе çаратусем пирки ĕçсене мĕнле пăхса тухни çинчен Йуçтици Халăх Комиссариачĕн докладне итлеме, судсем ĕçсене пăхса тухассине, çавăн пекех суд решенийĕсем тăрăх растратăсене шыраса илессине халех лайăхлатса йама хушас.

7. ПСК(б)П райкомĕсене, ПСК(б) Парти Шупашкар хула комитетне вунăкунлă срукра суту-илў организацисен кадрĕсем (районсенчи суту-илў пайĕсен пуçлăхĕсем, райпотребсойузсен председательĕсемпе заместительĕсем, торг отделенисен директăрĕсемпе вĕсен заместительĕсем) çинчен ыйту пăхса тухма, вĕсене çирĕплетме ПСК(б)П Обкомне тăратма, çавăн пекех йалпо председательĕсем çинчен ыйту пăхса тухма, çирĕплетнĕ йалпо председательĕсен спискине ПСК(б)П Обкомне тăратма хушас.

8. ПСК(б)П райкомĕсене çак çулти август уйăхĕнче районти парторганизацисен пухăвĕсене ирттерсе, пухусенче—ПСК(б)П Обкомĕ çак çулти майăн 9-мĕшĕнче суту-илў пирки йышăннине мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен, таварçавранăш планĕ мĕнле тулса пыни çинчен тата районта суту-илў ĕçĕсене лайăхлатса йамали ĕçсем çинчен ПСК(б)П райком секретарĕсен доклачĕсене итлеме хушас.

9. ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсене суту илў ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен тата таварçаврăнăш плайне мĕнле тултарни çинчен районти суту-илў организацисен руководительĕсен доклачĕсене тăтăшах итлеме хушас. ПСК(б)П Обкомĕ прилавкă работникĕсем хушшинче политикăлă ĕçсене туса пырасси тата стахановецсене йалланах пулăшу парасси çинчен йышăннине пурнăçа кĕртмеле.

10. Суту-илў Халăх Комиссариатне, Чăвашпотребсойуза, Чăвашторга, Чăвашвăрманпродторга, райĕçтăвкомсене тата ПСК(б)П райкомĕсене çакна асăрхаттарас: суту-илў ĕçĕсене çывăх вăхăтрах лайăхлатса йамасан, ПСК(б)П Обкомĕ çак çулти майăн 9-мĕшĕнче суту-илў çинчен йышăнна решенийе пурнăçа кĕртменшĕн айăплисене çирĕппĕн айăпламала пулать.

ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ Г. Иванов.

Вут-кăварпа выљакан самурайсем пысăккăн улталанаççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Йапони военщчини намăс та ирсĕр провокацисем тувипе тарăхса, Патăрйел районĕнчи ĕççыннисем нумай çынлă митинг туса ирттерчĕç. Акă мĕн çыраççĕ вĕсем хăйсен резолюцинче:

„Йапони çарĕсен çĕнĕ провокацийĕ Сталин йулташ капиталисăмлă йĕри-тавралăх çинчен, вăрçă хăрушлăхĕ çинчен, Хĕрлĕ Çара, çĕршыв оборонине тĕреклетме кирли çинчен асăрхаттарнисене татах тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Фашисла çĕлен калтасем Совет Сойузне хирĕç вăрçă чĕртсе йарасшăн. Анчах вут-кăварпа выљакан фашисем пысăккăн улталанĕç. Епĕр, Патăрйел район центрĕнчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хамăрăн йуратнă çулпуç Сталин йулташ: „Нимĕнле „ăнсăртлăх“ та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала“, тесе кăтартса панине никăçан та манмасăр, ăна тĕррĕн пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фашисла вăрçă чĕртекенсене арканса кайиччĕнех çапма пултарнине шансах тăратпăр. Епĕр пĕтĕм халăхпа пĕрле çапла калатпăр: „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр“ (Сталин).

Партипе правительствă пĕрре чĕннипех пурте пĕр çын пек пулса совет чиккисене сыхлама хатĕр тăратпăр.

Йапони военщчинин провокацине ответлесе, епĕр хамăрăн çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе татах вăйлăн ĕçлеме, халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр палăртса пĕтерсе пыма пулатпăр.

Епĕр коммунисен партийĕ тавра, Сталин йулташ тавра татах таччăн пĕтĕçетпĕр.

Епĕр социалисăмлă строительствăн пур участкисенче те стахановла йухăма татах вăйлăн сарса йама, хуçалăхла-политикăлă задачăсене пурне те ăнăçлă пурнăçа кĕртме пулатпăр.

Сывă пултăр пирĕн никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар!

Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем!“

Рабочисен отвечĕ

КАНАШ, августăн 4 мĕш. Йапони военщчини çĕнĕрен провокаци тунине ответлесе, вакунсем йусакан саватри рабочисем çĕнĕ производствăлă çĕнтерўсем тума йышăнчĕç.

Кантăрлахи кану. Цехсенче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ.

Тухса калаçакансем Йапони военщчинине чĕререн тарăхса ылханаççĕ.

Саватăн 3 пин çынлă коллективĕ Совет чиккисене кирек хăш минутра та сыхлама хатĕрри çинчен уççăн каларĕ.

Йапонецсем пирĕн ССР Сойузĕн территорине тапăнса кĕнине рабочисем, инженерсемпе техниксем Осоавиахим ретне массăллăн кĕнипе ответлеççĕ.—Осоавиахимра Хĕрлĕ Çарăн пултарулă, хăватлă резервĕ туса хурар,—теççĕ вĕсем.

Августăн 4-мĕшĕнче рабочисем пысăк çĕнтерў турĕç. 14 вакун йусаса панă.

Кун пек çитĕнĕве сават пĕрремĕш хут тунă. Ку вăл Йапони самурайĕсемшĕн витĕмлĕ ответ пулса тăрать.

В. Ласточкин.

Колхозниксен сăмахĕ

КЎКЕÇ. Августăн 6-мĕшĕнче „Память Ленина“ колхозра Йапони бандичĕсем Совет территорийĕ çине тапăнса кĕнине хирĕçлесе митинг пулса иртрĕ.

Митинг çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

Епĕр, колхозниксем, Йапони самурайĕсем пирĕн чикĕ çине ирсĕррĕн тапăнса кĕнипе тарăхса, пĕтĕм совет халăхĕ пекех çапла калатпăр: нимĕнле тăшман та пирĕн территори çинче пулма пултараймĕ. Хăть те мĕнле тăшман пултăр, Йапони самурайĕсем-и, Германи фашисĕсем-и—пирĕн телейлĕ çĕршыв çине хăть те ăçтан тапăнсан та, совет çĕршывĕ тата унăн паттăр халăхĕ вăрçă чĕртекенсем çапни çине çапнипех ответлеме йалланах хатĕр тăрать.

Епĕр, колхозниксем, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтăн бойецĕсене, пирĕн территори çине тапăнса кĕрекен Йапони агрессăрĕсене саланса каймалах çапакансене, колхозлă салам йаратпăр.

Йапони бандичĕсем пĕлсе тăччăр: совет пограничникĕсен хыçĕнче хурçă стена тăрать, вăл—Совет Сойузĕнчи 170 мĕлйуллă халăх.

Йапони империалисĕсем ирсĕр провокаци тунине ответлесе, епĕр сталинла вăйлă тырпула пĕр тăкаксăр тата кĕске вăхăтра пухса кĕме, государствăна сруккчченех тырă тăратма, çĕнĕ займ укçине вăхăтчченех тўлесе татма, Осоавиахим ĕçне вăйлатма пулатпăр.

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çарĕ тата унăн мухтавлă полководецĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Ворошилăв йулташ!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, аттe тата учитель Сталин йулташ!

Йунаса хăратас политикă пире хăратаймасть

Йапони военщчини тăвакан провокацисене хирĕç протеслесе, августăн 4-мĕшĕнче çаслă кинотеатр залĕнче Шупашкар хулинчи кинопа искусствă работникĕсен митингĕ пулса иртрĕ.

Митинг йышăннă резолюцире çапла калана: „Йапони фашисĕсем советăн таса чиккине ирсĕррĕн пăснине чĕререн тарăхса ылханатпăр. Пирĕн пархатарлă Хĕрлĕ Çар Йапони йыттисене хăйаррăн çапрĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн бойецĕсене, командирĕсене хĕрўлĕ салам! Пирĕн пархатарлă та хăватлă Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ малашне те аркатса тăкмалах отпор парассине, йунаса хăратакан политикă пире хăратманнине Йапони самурайĕсем асра тытчăр.

Епĕр, кино тата искусствă работникĕсем, Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăх пекех çапла калатпăр: кирлĕ пулсан партипе правительствă чĕннипе пурте пĕр çын пек кар тăрса хамăрăн тăван çĕршыва хўтĕлеме тухатпăр.

Епĕр искусствăпа кино работникĕсене пурне те хамăрăн большевикла парти тавра, аслă Сталин тавра тата тачăрах пĕтĕçме, хамăр çĕршывăн оборонă пултарулăхне кунсерен т реклетме, Осоавиахимăн пуçламĕш организацисен ĕçне вăйлатма чĕнетпĕр.

„Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх“ та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала“ (Сталин).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенчĕ

Хĕвелтухăç фронтĕнче интервентсемпе пăлхавçăсем йулашки кунсенче темиçе хутчен те контратакăсем тунă, анчах вĕсене хирĕç республиканецсем татăклăн та çирĕп тăнă. Тăшман пысăк тăкаксем тўсет.

Республиканецсем хăйсен Гандеçă тавра йышăннă позицийĕсене çирĕплетнĕ. Файонран çурçĕрелле республиканецсем малалла куçса пыраççĕ.

Республиканецсем хĕвелтухăç фронтĕнче наступлени туса пыни вĕсене Левант фронтĕнче те, Гвадалавиар сектăрĕнче те (Теруелрен хĕвеланăç йенчеле) малалла куçма май панă. Унта республиканецсем чылай пунктсем йышăннă, нумай çынна тыткăна илнĕ тата нумай вăрçă хатĕрĕсем туртса илнĕ.

Центри фронтра пăлхавçăсем республиканецсен Мадридри Каса дел Кампо паркĕнчи позицийĕсем çине темиçе хутчен те тапăнма хăтланса пăхнă. Çапла тапăнма хăтланнисене республиканецсем пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă. Пăлхавçăсем пысăк тăкаксем туса кайала чакнă.

(ТАСС).

Испани Мароккинчи госпитальсем аманнă салтаксемпе тулса ларнă

Тетуанре, Сеутăра тата Испани Мароккин ытти хулисенче те госпитальсем аманнă марокканецсемпе тулса ларнă, вĕсене Левант фронтĕнчен илсе пынă. Аманнă марокканецсем пыни вырăнти халăха пăлхавçăсем çине хытă тарăхтарать.

(ТАСС).

Британи дипломатийĕ агрессăрсене ваљђи çул хывать. А. Орлов ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Германирен Франко ваљђи çĕнĕ хĕçпăшалсем илсе пыраççĕ

Çак кунсенче Германири Штеттин йатлă портран Сеутăна (Испани Марокки) интервентсен çарĕсем валљи вăрçă материалĕсен грузне (танксем, самолет моторĕсем тата ыт.) тийенĕ пăрахут тухса кайнă. Командăна пысăкрах ĕç укçи пама пулнă, анчах та пăрахут çитес вырăна çитсен тата командă ăна пама пулнă пысăкрах ĕçукçине ыйтсан—12 морйака арестленĕ.

Интервентсем йышăнса илнĕ территоринче пурăнакан халăхсен шухăш-кăмăлĕ çинчен калакан пĕр морйакăн заявленийĕ характерлă. „Епĕр çыран çине ансан,—тесе каласа парать вăл,—Бильбаора тата ытти портсенче, халăхсем пире пысăк шанăççăрпа, пысăк çилĕпе кĕтсе илчĕç. Ачасем, епĕр нимĕçсем пулнине пĕлсен, пирĕн çине чулсемпе пеме пуçларĕç“.

(ТАСС).

Республиканецсен Альбаррасин сăрчĕсем çинчи наступленийĕ

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, республиканецсем августăн 1-мĕшĕнче Альбаррасин сăрчĕсем çинче (Теруелрен хĕвеланăç йенче 50 километрта) пуçланă наступлени ăнăçлăн пырать. Республиканецсем Альбаррасин йатлă сăрталă районăн тўписене йышăннă, вĕсем нумай уйăхсем хушши пăлхавçăсен аллинче тăнă тата ăна вĕсем вăйлăн çирĕплетнĕ пулнă.

Республиканецсем çулĕ вырăнсем çинче тĕреклĕн вырнаçнă, малалла наступлени туса пыраççĕ.

Пулăшни кунсем хушшинче республикăна Германипе Итали 40 самолетне персе антарнă, çав вăхăтрах республиканецсен 8 самолет кăна пĕтнĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Хайсей пĕтĕм лайне центрта фронта хурса, Йапони командованийĕ Пакцзы йухăншывĕ таврашĕнчи тўрем вырăна йулашки кунсенче çĕнĕрен 20 пин çынлă çар илсе пынă.

Йапонецсем пĕтĕм лайне хурса, Хањкоуна (Китайăн пысăк промышленноçлă центрне, Аньхуей провинцин тĕп хулине) туртса илесшĕн тăрăшаççĕ. Йапони империалисĕсем Хањкоуна туртса илнипе Китай правительствин агрессăр „ырăлăхне“ парăнасса ĕмĕтленеççĕ.

Анчах йапонецсем малалла пит хуллен куçса пыраççĕ. Хањкоу патне çитме тата 200 километра йахăн йулнă. çав 200 километр хушшинче Китай çарĕсем нумай пунктсене лайăх çирĕплетнĕ, ывăлă вырăнсем пур.

Пакцзы йухăншывĕн çурçĕр çыранĕ çинче нумай вăхăт çапăçнă хыççăн йапонецсем Сусунпа Чжанмей хулисене йышăннă. Анчах унта та йапонецсен наступленине Китай çарĕсем ăнăçлăн чарса тăраççĕ. Вăл районри йухăншывсем хулса сарăлса кайнипе йапонецсене çапăçма татта ытларах йăварлана.

Йапонецсем йышăннă районсенче партизан йухăмĕ ытларан ытларах ўссе пырать. Çурçĕр йенче партизан отрячĕсем пысăк та анлă территори çинче кĕрешеççĕ. Шаньдун провинцинче партизансем йапонецсем аллинчен 60 уйес кĕрешсе илнĕ. Шаньси, Хебей тата Чахар провинцисенче 9 мĕш революцилĕ халăх çарĕн чăçĕсем партизансемпе пĕрле кĕрешсе пысăк территорийе йапонецсенчен тасатнă. Хальхи вăхăтра 8-мĕш çар чăçĕсем Бейпинпа Тяньцзин çывăхĕнче çапăçусем сарса йанă. Китай çарĕсем пĕр пайĕ Манчжурин çĕмĕрсе кĕнĕ. Китай салтакĕсемпе партизансем пухăнни халăха йапонецсене хирĕç çĕкленĕççĕ. „Манчжури çарĕсене агитацилесе хăйсем йенне куçараççĕ. Жехе провинцинче (Манчжоу-Го) Манчжури салтакĕсем Йапоние хирĕçле восстани хыпса тухнă. Бейпинпа Жехе хушшинчи чукун çул çыхăнăвне татнă.

(ТАСС).

Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн Пĕтĕм Сойузри йубилейлă спартакиади

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ 20 çул тата „Динамо“ спорт обществи 15 çул тултарнă йатпа августăн 5-мĕшĕнче Мускавра Пĕтĕм Сойузри йубилейлă спартакиадă уçăлнă.

Спартакиадăна Совет Сойузĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен социалисăмлă тăван çĕршыва паттăр хўтлекенсем 4000 çын килнĕ.

Спартакиадăна уçнă чухне бойец-физкультурниксене Совет Сойузĕн маршалĕ С. М. Буденнăй хĕрўллĕн саламланă.

Спартакиадă 9 кун хушши пырать.

(ТАСС).

Çĕрмамăкĕ пулса çитет

Совет Сойузĕнчи çĕрмамăк плантацисем пĕтĕмпех чечекре. Çĕрмамăкĕ пур çĕрте те вăтам тата аван. Кăçал çĕрмамăкĕ пур çĕрте те ытти çулсенчи пек мар, 5—10 кун маларах пулса çитни палăрать.

Узбек республикин чылай районĕсенчи колхоз хирĕсенче çĕрмамăкĕн малтанхи пуçĕсем уçăлса сарăлнă. Таджик республикинче Паркар районĕнче кăçалхи çĕрмамăкне пухма пуçланă. Вăтам Азири республикăсен тата Казахстанăн ытти районĕсенче те çĕрмамăкне пухма пуçлаççĕ. Хирсене шăварман районсенче те çĕрмамăкĕ питĕ лайăх ўсет. Украинăри тата Орджоникидзе крайĕнчи кăнтăр йенчи хăшпĕр колхозсенче çĕрмамăкăн малтанхи пуçĕсем пулса çитнĕ. Крымра çĕрмамăкĕ питĕ лайăх чечекленнĕ, унта çĕрмамăкĕ нумай пулса илме ĕмĕтленеççĕ.

(ТАСС).

Тырпул пухас ĕçри çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерессишĕн

ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн бюровĕ, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре мĕнле пыни çинчен нумай пулмасть йышăннă постановленире, райкомсемпе райĕçтавкомсем тата ... çĕрĕç пайĕсемпе МТСтанцисем колхозсене кулленхи тата оперативлă йертсе пыман пирки, тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулса пынине кăтартса парать. Чылай районсенчи колхозсенче машинăсемпе, комбайнсемпе ĕçлессине хирĕçле шухăшсем сарăлнă. Комбайнсене ĕçлеме уйăрнă участкăсенчи тырăсене алăпа вырса, хаклă вăхăта сая яраççĕ. Уйрăм районсенче (Елĕк) комбайнсем валли участкăсем тырă пиççе çитмен çĕрте уйăрса параççĕ те, пиççе çитнĕ тырăсене колхозниксем алăпа выраççĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕнĕ çĕрте ĕçлекен комбайнсен агрегачĕсене техникăпа организаци йĕнчен ертсе пырасси те пит çителĕксĕр пулса пырать. Патăрйел районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозра комбайн ĕçлеме тытăнсан, малтанхи кунах шнек ваннă пирки, комбайн пĕр талăк ĕçлемесĕр ларнă. Комбайнерăн шнека вырăнтах йĕркелеме май килмен пирки, МТСтанцине çурран 15 километр кайма тивнĕ.

Машинă тракторлă станцин тата райçĕрĕç пайĕн руководителĕсем комбайнсемпе ĕçлекен колхозсене пухса çÿремеççĕ. Вĕсем тырпула комбайнпа вырса пуçтарасси политикăпа экономика йĕнчен мĕнле пырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ. Çав вăхăтрах парти райкомĕпе райĕçтăвкомра ĕçлекен работниксем комбайнсем ĕçлекен участкăсене пырсан, начар тĕслĕхсене çеç шута илеççĕ. Ĕçри çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтĕрес тĕлĕшпе комбайнерсене нимĕнле пулăшу та памаççĕ.

Чылай районсенче витнĕ итемсем çинче, авăн çапакан вырăнсенче тата комбайнсен агрегачĕсенче пушара хирĕç кĕрешекен охрана çук. МТСтанцин молотилкисемпе комбайнсем çумĕнче пушара хирĕç кĕрешмели ĕçхатĕрĕсем те çук. Уйрăм районсенче (Парачкавра) тырпулсене пуçтарса кĕнĕ çĕрте тара тытса ĕçлеттерсе, вăйхуçалăх ертел уставне пасна тĕслĕхсем пулнă.

Пур районсенче те пекех кĕлтесене капана хывассипе авăн çапас ĕçсем йулса пыраççĕ. Чылай районсенче машинă - трактăрлă станцисен молотилкисем авăн çапма тытăнман.

Главнефтесбыт бази МТС-сем валли кирлĕ таран çунтармалăпе сĕрмелисене тăратас тĕлĕшпе чăтма çук çителĕксĕр ĕçлет. Главнефтесбыт кантурĕнче ĕçлекен работниксем трактăрла комбайнсем тата автотранспарт валли кирлĕ таран çунтармалипе сĕрмели йапаласене кÿрсе килсе тăрас тĕлĕшпе ответлă пулнине халиччен туйса илмен.

Уйри тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес çĕрте организацилĕ политикăлă пысăк ĕçсене туса иртернĕ пулин те, уйрăм колхозсем тырпулсене пуçтарса кĕме пысăк çитменлĕхсемпе тухнă, ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелемен, социалисăмлă ăмăртăва сарса, стахановла ĕçлекенсен йышне ÿстерсе пырассишĕн чăннипе кĕрешсе пыйи пулайман.

Уйрăм колхозсем государствăна клешч йерне тырăна пама пăхни те пур.

Çак çулте асăннă çитменлĕхсем вĕсем пурте уйри тырпулсене хăвăрт тата тăккаламасăр пуçтарса кĕрессине, авăн çапас ĕçе тата государствă умĕнчи пĕрремĕш заповĕде вăхăтра пурнăçлассине чăрмантарса параççĕ. Çавăнпа та ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн бÿровĕ уйри тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçри пур çитменлĕхсене те хăвăрт пĕтерме хушса хăварчĕ.

Натурплата тыррине те пачĕç

ЕЛĔК. Иседеркă йалĕнчи „Ядро" колхоз уйри тырпулçене пĕр тăкаксăр вырса пĕтерчĕ. Хаљ колхозри бригадăсем кĕлтесене турттарса капана хываççĕ, авăн çапаççĕ.

„Ядро" колхоз государствăна ыраш пăрса татрĕ. Çавăн пекех МТС ĕçласе панăшăн натурплата шучĕпе 23 центнĕр ытларах ыраш леçсе пачĕ.

Ив. Маркелăв.

Ĕçе хăвăртлатни кирлĕ

ВĂРНАР. Районри колхозсем августăн 1-мĕшне кĕрхи тырăсене вырса пĕтерсе, çуртрисем вырма тытăнчĕç. Малта пыракан колхозсем авăн çапса, государствăна тырă параççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Малтикасри „Пĕрлешÿ," Хурăнсурти Чапайĕв ячĕпе тăракан, Кăкшăмри „Ĕç йалавĕ" колхозсем государствăна ыраш парса татрĕç.

Çав вăхăтрах районри чылай колхозсем государствăна тырă пама тытăнман. Хăшпĕр колхозсем 4—5 центнĕр çеç панă. Чалăм Кăкшăм колхозĕн ыраш парса татма май пулнă, анчах 9 центнĕр çеç панă.

Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна тырă тăратмали обйазательствăна 24 процент кăна тултарнă. Государствăна тырă тăратасси ытти ĕçсенчи нумай кайа йулса пырать. Чылай колхозсем çуртрисене те вырса пĕтереççĕ. Çавах тырă пама тытăнмаç. Куйентĕ пĕрлешÿвечен тырпул хатĕрлев пунктинче те чылай килет. Хатĕрлев пунктĕ çĕнĕ тырра йышăнма кирлĕ пек хатĕрленмен.

Ст. Улангай.

Ватă колхозник-стахановецсем

Ишекри (Ишлей р.) Сталин ячĕпе тăракан колхоз çурхи тырăсене вырса пĕтерет. Тырă вырнă çĕрте ... тулли усă кураççĕ. Г. Илйин, Т. Степанов, М. Лопухов машинистсем çичĕ пăра 9—10-шар гектар вырса параççĕ. ... Кĕлте ... М. Алексейĕв, М. Овчинникăв, С. Ручкин йулташсем 700—800-шер кĕлте çыхса, ĕç нормине 140—150-шер процент тултараççĕ.

Колхозра ватă колхозниксем те çамрăксенчен йулмаççĕ. Вĕсем çĕрпĕринпе ăмăртса стахановла ĕçлеççĕ. И. Андрейĕв—78 çулта, С. Васильйĕв—74 çулти, вĕсем куллен 500—600-шер кĕлте çыхса параççĕ. Çавăн пек ватă колхозниксем стахановецсем колхозра чылай.

Сакмăрмĕш бригадă хĕрсе авăн çапать. Ку вăхăтчен 875 пăт ыраш çапнă.

А. Наумăв.

Вĕретнĕ шыв

Шупуçĕнчи (Трак р.) „Сывлăх" колхозра уйхир ĕçĕнче ĕçлекенсен валли уйа вĕретнĕ шыв илсе тухаççĕ, уйа шыв вĕретсе тухни вăрăх вăхăтра вараланми чирсенчен сыхланма пулăшать.

А. Йакăвлĕв, П. Йемелйанăв.

Тырпула пухса кĕртсен

ÇĔМĔРЛЕ. Районта малта пыракан колхозсем уйри тырпула пуçтарса кĕртнĕ хыççăн, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе тытăнчĕç.

Пайанхи куна Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз—30 центнĕр, „Заря" колхоз—22 центнĕр, Ман Улхашри „Красноармеец" колхоз—38 центнĕр государствăна ыраш леçсе панă.

П. Йакăвлĕв.

Фосфорит çăнăхĕпе анлăн усă курар

Тырпул тухăçне ÿстерес çĕрте удобрени пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Çĕре çемçетмели йапала вăл вăйлă тырпул туса илмели шанчăклă май пулса тăрать. Çав йапала çителĕксĕр пулсан, тырпул начар пулать. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни колхозăн тĕп задачи вăл—çĕре тĕрлĕ майсемпе çемçетесси пулать. Кирек мĕнле çĕр пулсан та тырпулсене çитĕнме азот, фосфăр, кали тата извĕç кирлĕ. Çавăнпа та кĕллĕ, хура тăпраллă тата вăрман ти çĕрсене çав асăннă йапаласемпе çемçетмеле. Опытсем кăтартнă тăрăх, çак йапаласемпе çемçетсен тырпул тухăçĕ чылайах хăпарать. Акă, Чăвашсен опытлă станцийĕ 1933 çулта кĕллĕ тăпрана фосфăр, кали илсе пĕрле çемĕçтерсе тата уйрăммăн çемĕçтерсе опыт туса пăхнă. Уйрăмĕн çемĕçтерни тырпул тухăçне ÿстермен. Азот тырпул тухăçне 96 процент, фосфăр азотпа пĕрле 119 процент, виççĕшĕ пĕрле 125 процент ÿстернĕ. Çавăн пекех станци туса пăхнă опыт çакна кăтартать: хура тăпрана кашни гектар пуçне 3-шер центнĕр суперфосфат пани ыраш тухăçне 12 процент, 6 центнĕр фосфорит çăнăхĕ пани 10 процент, çакăн чухлĕ фосфорит çăнăхĕ пăрçа тухăçне 35 процент, çĕрулмине—31 процент, фосфорит çăнăхĕпе çилвинит пĕрле—пăрçа тухăçне 58 процент ÿстернĕ.

Вăрмар районĕнчи „Майак" колхозра шупка-кăвак тĕслĕ тăмлă тăпрана кашни гектар пуçне 6-шар центнĕр фосфорит çăнăхĕ пани çĕрулми тухăçне 33,8 центнĕр, 3 центнĕр суперфосфат пани—24,6 центнĕр таран ÿстернĕ. Çак опытсем пирĕн çĕрсене тĕрĕс пĕлсе çемçетсен вĕсем пысăк усă панине кăтартса параççĕ. Фосфорит çăнăхĕпе кали усăллă пултăр тесен, азотлă удобренисемпе усă курас пулать. Çакăн пек тăвас тесен çĕре çемçетмели вырăнти органикăлă йапаласене ытларах хатĕрлесе уйа кăлармала. Ун хыççăн нумай çул хушши ÿсекен курăксем акмала, симĕс удобренипе усă курмала. Мĕн пур пухăнакан кĕле калилĕ имçам шучĕпе, извĕç туфĕ, мергел, чĕрĕ извĕç, фосфорит çăнăхĕ уйа ытларах кăлармала. Фосфорит çăнăхĕ, ăна пирвайхи çул икĕ хут нумайрах çапсан, кĕрхи тырăсен, пăрçа йышши культурăсен тата çĕрулми тухăçне ÿстерес йенĕпе суперфосфатран пĕртте йулмасть.

Пирĕн условире фосфорит çăнăхĕпе суперфосфат хушшинче уйрăмлăх пур. Пĕр тоннă фосфорит çăнăхĕ—21 тенкĕ, суперфосфат—78 тенкĕ тăрать. Кунта çакна та шута илес пулать. Фосфорит çăнăхĕ вăйлă тырпул туса илес çĕрте 5—6 çул хушши тата ытларах та усă парса тăма пултарать. Акă хĕвеланаçĕнчи опытлă станцисем сăнаса пăхнă тăрăх, фосфорит çăнăхĕ тырпул тухăçлăхне 9—10 çул хушши ÿстерсе тăнă.

Суперфосфат йÿçеклĕ имçам. Йÿçеклĕ çĕре сернокислăй аммонипе (йÿçек удобрени) пĕрле парсан, çĕр йÿççе кайать те начарланать. Фосфорит çăнăхĕ йÿçеклĕ мар, çийевлĕ имçам. Унта извĕç пур. Ăна çĕртме уйне йалан кăларса тăрсан, тулă, пăрçа йышши культурăсене, кантăр, вылăх кăшманĕ тата ытти культурăсене туса илме çĕр лайăхланать. Çав культурăсем йÿçеке йуратмаççĕ. Кусемсĕр пуçне фосфорит çăнăхне хамăр республикăрах туса кăлараççĕ, суперфосфата республикă тулашĕнчен кÿрсе килмеле. Анчах кунта пире фосфорит çăнăхĕ кăна кирлĕ, суперфосфат кирлĕ мар тени йăнăш пулнă пулĕччĕ. Вĕсене пĕрне теприн чен уйăрма кирлĕ мар.

Фосфорит çăнăхне кĕрхи тырăсем айне парса хăварсан пит усăллă пулать. Ăна сÿрелес умĕн сапма йурамасть. Фосфорита йÿçек йе йÿçекрех тăпра айне сапмала. Ăна обйазательнă органикăлă удобренисемпе—торфпа, тислĕкпе, компостпа пĕрле тăкас пулать. Тимирйазев ячĕпе тăракан йалхуçалăх Академийĕн сăнав уйĕнчи ĕçсем кăтартса панă тăрăх, нимĕн те тăкман çĕрте вика 31 центнĕр, фосфорит çăнăхĕпе çемçетнĕ çĕрте 32,1 центнĕр, торфпа—36,14 цент., торфпа фосфорит çăнăхне пĕрле—42,1 центнĕр пулнă. Фосфоритран пысăк усă илес çĕрте пусуçаврăнăшсем, нумай çул хушши ÿсекен курăксем акни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Анчах, пирĕн республикăри районсем минераллă удобренисене турттарса килессипе пит начар ĕçлеççĕ. Акă, Турхан районĕн 358 тоннă çурă тĕрлĕрен удобренисем турттарса килмеле пулсан, пĕтĕм районĕпе те 26,7 тоннă çеç турттарса килнĕ. Калас пулать, Турхан районĕнче минераллă удобренисемпе усă курасси начар пулса пырать. Патăрйел, Шăмăршă районĕсем те ку тĕлĕшпе калама çук йапăх ĕçлеççĕ. Çакăн пек йĕркене малала чăтма çук. Минераллă удобренисене турттарса килес çĕрте татăклă улшăну туни кирлĕ. Вĕсене кĕрхи тырăсем айне тĕрĕс сапса хăвармала.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Тĕштырă управленин аслă агрономĕ Никитин.

Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче

ШĂХАСАН. Тырпула пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксем чирлеме пултараççĕ, алсене амантаççĕ. Анчах, Шăхасан районĕн сывлăх пайĕ çакна пачах та шутра тытмасть. Йамашри Макарăвă трахработнин ăна уборкă вăхăтĕнче отпуск панă. Халĕ „Ударник" колхозра та, „Доровин" колхозра та трахработник çук. Колхозниксене час-часах пулăшу кирлĕ пулать.

А. Иванов.

Суту-илÿ хирте

Ман Йамашри йалпо (Хĕрлĕ Чутай р.) çĕнĕ магазин лартнă. Магазина йаланах таса, культурăлă тытаççĕ. Унта радио пур.

Йалпо уйри тырăсене пухса кĕме лайăх хатĕрленсе тухнă. Колхозниксене кирлĕ таварсене çителĕклĕ илсе килнĕ. Йалпо уйрăмĕнчи лавкасем уйра ĕçлекенсем патне пырса сутă тăваççĕ.

Тавар турттарма йалпо автомашинă илнĕ.

М. Иванов.

Кив Шелтем йалповĕн (Канаш р.) пур уйрăмĕсенче те колхозниксенĕ кирлĕ таварсене уйа илсе тухса сутассине йĕркеленĕ. Кив Шелтемри продавец Иван Йакăвлĕв „Ака туйĕ", „1-мĕш Май" тата Сталин йулташ ячĕпе тăракан колхозсен пур бригадисене те çитрĕ. Куçса çÿрекен лавкара махоркă, спичкă, пирус, сахăр, мануфактурă пур. Йакăвлĕв çак кун 180 тенкĕлĕх тавар сутрĕ. Йачпори пур уйрăмсене пĕрле шутласан, июлĕн 28-мĕшĕнче 5 пин тенкĕлĕх тавар сутнă.

С. Леонтйĕв.

Штанаш йалпоне кĕрекен (Хĕрлĕ Чутай р.) Хозанушкĕн йалĕнчи лавкари продавец Д. Кокшейкин çăмарта пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вăл государствăна 20 пин çăмарта пухса пама обйазательствă илнĕччĕ. Кокшейкин йулташ хăй çине илнĕ обйазательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлерĕ. Колхозниксене кирлĕ таварсене вăхăтра кÿрсе пырса сутрĕ. Çапла ĕçленипе вăл çăмарта пухма илнĕ обйазательствăна 120 процент пурнăçларĕ.

Л. Закопăв.

Йалпо ĕçĕсем

Сикасси (Канаш р.) йалпо иртнĕ çулсемпе танаштарсан, кăçал ниxăçанхинчен пысăк çитĕнÿсем турĕ. Сиккасси йалпо правленине виçĕ йал кĕрет. Виçĕ йалта виçĕ лавка. Лавкасенче сахăр, спичкă, чей, махоркă, супăнь йаланах çителĕклĕ. Сикасси йаленче кăçал тепĕр лавка уçнă, 1938 çулхи икĕ кварталти таварçаврăнăш планне 116,6 процент тултарнă. Çакнашкалах çăмарта хатĕрлессин çулталăкри планне 106,6 процент тултарнă. Ку ĕçре уйрăмах И. Мухин (Сиккасси), Н. Кириллăв (Йаманкасси) йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Йалпо йалхуçалăх таварĕсене кÿрессине те 100 процентпех пурнăçланă. Лавкасенче çавасем, çурласем, лапаткасем те çителĕклĕ пулчĕç. Вĕсенче патефонсем, ачапăчасене выляmalи йапаласем, илемлĕ литературă кĕнекисем, сехетсем, гармоньсем т. ыт. таварсем те нумай.

Халĕ йалпо Шмидт ячĕпе тăракан колхозпа грузовой автомашинă илсе килме договăр тунă.

И. Иванов.

Тивĕш йалповĕнче

Тивĕшри йалпо (Ишлей р.) кашни кварталрах тавар çаврăнăш планне тултарса пырать. 1-мĕш кварталра 96 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан 102.652 тенкĕлĕх сутнă, 2-мĕш кварталра 160.110 тенкĕлĕх вырăнне 170.505 тенкĕлĕх тавар сутнă. 3-мĕш кварталри таварçаврăнăш планĕ тăрăх 160 пин тенкĕлĕх сутмала, пайанхи куна 43 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Йалпон кашни уйрăмĕнчех халхи вăхăтра колхозниксене кирлĕ таварсене уйа илсе тухса сутаççĕ. Йалпо уйрăмĕсене машинисене сĕрмели çусем, урапа сĕрмели мас т. ыт. кирлĕ таварсене те çителĕклĕ илсе пынă. Кÿрсе килнĕ таварсене йалпо уйрăмĕсене автомашинăпа леçсе параççĕ.

Тивĕш йалповĕ 1938 çулхи таварçаврăнăш планне тултарас тĕлĕшпе Акрамăвă йалповĕпе ăмăртса ĕçлет. Продавецсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Ăмăрту договăрне мĕнле пурнăçласа пынине кашни уйăхрах тĕрĕслеççĕ.

Йалпо таварçаврăнăш планне вăхăтра тултарса пырать пулсан та, çитменлĕхсем те пур-ха. Виçĕ уйăрмăра лавкасен çурчĕсем хĕлле сутма йурăхсăр. Вĕсене хĕле кĕме хатĕрлеме пуçăнман. Шетмĕпуçĕнчи уйрăмра (продавец Йегорăв) таварсене таса тытмаççĕ, продавец хăшпĕр чухне халатсăр сутă тăвать. Йамайкасси уйрăмĕнчи продавец пасарсене сахал тухса çÿрет. Лавкана вăхăтра уçмасть.

И. Волкăв.

Тÿлесе татнă

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Вăрман Йенĕш йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем кăçалхи налог укçине тÿлеме тытăнчĕç. Налог тÿлемели çинчен пĕлтерекен хута илнĕ кунах П. Алексейĕв, А. Бычков, Н. Çмирнов колхозниксем налог укçине парса татрĕç.

Н. Михайлăв.

Займ хроники

** Шур Çырма йалсоветĕнчи (Трак р.) „Унгострой" колхозра займ уполномоченнăйĕ А. Герасимăв йулташ халăх хушшинче „Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ" çинчен калаçусем иртерет. Малтан займ çырăнмасăр йулнă колхозниксем халĕ çырăнаççĕ. Герасимăв йулташ çак ерне хушшинче кăна 1400 тенкĕлĕх займ çырăнтарчĕ.

И. Дубровин.

** Турханти (Ишлей р.) „Çĕнĕ Хунав" колхоз членĕсем çĕнĕ займа 100—150 тенкĕшерлĕх çырăнчĕç.

Колхозĕпе 3 пин тенкĕлĕх займ çырăннă. Халĕ колхозниксем çĕнĕ займшăн укçа тÿлеççĕ.

А. Çмирнов.

** Орининă йалсовечĕ (Тутаркас районĕ) займ сарас ĕçпе Пушкăрт йалсовечĕпе ăмăртса ĕçлерĕ. Ăмăртура Орининă йалсовечĕ мала тухрĕ. Иртнĕ çулта йалсовечĕпе 16000 тенкĕлĕх займ илнĕ пулсан, кăçал 17720 тенкĕлĕх займ илчĕç. „Восток" колхоз членĕсем 3 540 тенкĕлĕх займ çырăнса, 700 тенкĕ укçа хывнă.

А. Т. Калинин.

** Кивĕ Сăнар йалсоветĕнче (Патăрйел р.) июлĕн 26-мĕшĕнче нумай ачаллă ача амăшĕсен пухăвĕнче „Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ" çинчен ăнлантарчĕç. Ача амăшĕсем пухура 1200 тенкĕлĕх займ çырăнчĕç. Степанăвă, Воробйова, Дăвкăнăвă, Ишмуратăвă, Тимофейевă йулташсем 150 тенкĕшерлĕх çырăнса, укçине çывăх кунсенчех тÿлесе татма пулчĕç.

Н. Квасăв.

** Вăрмарти машинă-трактăрлă станцийĕнчи трактăрисем çĕнĕ займа 1000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Матвейевпа Йамашчиков йулташсем 200-шер тенкĕлĕх займ çырăннă.

А. Никифăрăв.

** Çĕмĕрлери столовăйсенче ĕçлекенсем иртнĕ çул 8280 тенкĕлĕх займ илнĕ пулнă, кăçал 9165 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Займ сарас тĕлĕшпе уполномоченнăйĕ Кусмин йулташ тăрăшса ĕçлерĕ.

С. Н. Николайĕв.

Государствăна—пысăк пахалăхлă сÿс

Елĕк районĕнчи кантăр тылласа сÿс тăвакан савăта 8 районти колхозсем кантăр параççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Тĕпкомĕ „Йетĕн тата кантăр контрактацилемели план çинчен" йышăннă постановлени тăрăх, колхозсен государствăна кантăр памали нормине пĕчĕклетнĕ, сÿс хакне ÿстернĕ. Кусемсĕр пуçне колхозсем договăртан иртерсе панă кантăршăн 100—140 процент таран преми надбавкă илме пултараççĕ. Мĕн чухлĕ сÿс пахалăхĕ авăн, çавăн чухлĕ вăл хаклăрах.

6—15 километртан сÿс леçсе панăшăн кашни центнĕршăн километр пуçне 3-шар пус, 16 километр айкуран леçме километр пуçне 5-шер пус укçа тÿлеççĕ. Çав укçана лайăх хăй аллине илет. Кунсăр пуçне ăна колхозра ĕçкунĕ параççĕ.

Пахалăхлă сÿс тăвасси ăна вăхăтра суртласа татнинчен тата шыва хуса лайăх пултарнинчен нумай килет.

Пусана тата кантăра татассин хăйĕн йĕркисем пур. Пусана кантăртан пĕр уйăх маларах татас пулать. Пуса сÿсĕ кантăр сÿсĕ пекех паха пулма пултарать. Пусана саралнă вăхăтра татсан пит аван. Татса, пуса çурăмĕсене типĕтме хыççăн суртласа, пултарма шыва хутмалла.

Кантăр—унăн вăрри авăс пек пулса çитнĕ вăхăтра татас пулать. Кантăра татнă чухне çакна асăрхамала; вăрăмрах кантăра—уйрăм çурăмсем тата кĕскисене—уйрăм çурăмсен тумала. Кун хыççăн вĕсен тымарĕсене татса, пĕчĕк тăмесем туса типĕтес пулать.

Хăшпĕр çĕрте кантăра çапма пĕлмен пирки унăн пахалăхне чакараççĕ. Кантăр вăррине çапнă чухне кантăр тунине çĕмĕрмеле мар.

Кантăра молотилкăсемпе те çапма пулать. Анчах кун пек чухне вара молотилкăна кăшт урăхлатса вырнаçтарса лартма кирлĕ. Молотилкăн декателĕн пайне айаларах антармала, барабан валĕ çинчи шкиф çине йавăçран тунă сурункасем вырнаçтарса, барабан çаврăнассин хăвăртлăхне икĕ хут чакармала тăвас пулать. Барабан çинчи шăлсене тырă çапнă чухнехинчен тепĕр майлă çавăрса лартмала. Çакăн пек хатĕрленĕ хыççăн çапма та йурать. Кантăр çурăмне алпа тытса, пуçне барабан ăшне чиксе çавăркаласа тăмала. Вăррине çапсан, кайала илмеле. Çапнă хыççăнах вăхăта вăраха йамасăр шыва хутас пулать.

Кантăрпа пусана шыва хутнă чух вăрăммисене тата кĕскисене уйрăммăн, хутăштармасăр хутма кирлĕ. Çакăн пек тусан пуса йе кантăр пĕр вăхăтра пулса çитет. Кантăр сулине шывра тăпрала пуйтарма кирлĕ мар. Вăл кантăр пахалăхне чакарать. Вĕсене йăвăç каскисемпе йе чулсемпе пуçтармала. Шыв ăшă пулни кирлĕ. Шыв мĕн чухлĕ ăшăрах, çавăн чухлĕ сÿс пахалăхĕ аван пулать. Пулса çитнĕ кантăра шывран асăрхаса кăларас пулать.

Кантăра малтанах лайăх суртласа татнă пулсан, кашни суртне хăйне уйрăммăн сулă туса шыва хутнă пулсан, шывра кантăр пĕр пек пулса çитет. Çакăн пек кантăра государствăна леçсе парас умĕн суртлама кирлĕ мар.

Государствăна паха сÿсе вăхăтра парасси—кашни колхозăн пысăк задачи пулать. Кашни колхозăн çанталăк уйăр чухне, çăмăрлă кунсем пуçланиччен государствăна сÿс-кантăр парса татассишĕн кĕрешмелле.

Агроном С. Федăрăв.

Куллен кирлĕ таварсем кăларассине вăйлатсах пымала

Пĕр уйăх каярах ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ куллен кирлĕ таварсем кăларассине вăйлатасси çинчен постановлени кăларчĕ. Çак постановленипе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ĕççынисен пурнăçне аванлатсах пыма,—хамăр çĕршыври пуйан условисемпе тулли усă курма çулсем кăтартса парать.

Пирĕн аслă Совет çĕршывĕнче ĕççынисене пурне те чăн-чăн пуйан та культурăлă пурнăçна пурăнакан тума вĕçсемсĕр пысăк условисем пур. Вăйлă техникăлă хăватлă промышленнăç мĕн кирлĕ таран таварсем кăларма пултарать. Чĕрĕ таварсен пуйанлăхĕ нумай. Лайăх таварсем кăларма пултаракан кадрсем те çителĕклĕ. Стахановла йухăм вăйланса пынă май ĕç тухăçлăхĕ те ÿсет, çавăнпа пĕрлех рабочисемпе интеллигенци тата служащисен ĕç укçи хисепĕ, колхозниксен тупăшĕ пĕрмай ÿссе пырать,— çаксем пурте ĕççынисен таварсем илес пултарулăхне вăйлăн çĕклеççĕ.

Иртнĕ 1937 çулта Чăвашпромсойуз системи 15 497 пин тенкĕлĕх тавар кăларнă пулсан, кăçал малтанхи çур çул хушшинчех 10.370 пин тенкĕлĕх кăларнă. Вырăнти промышленнăç нумай пин тенкĕлĕх таварсем кăларать. Районсенчи промышленнăçăн предприйатийĕсем çурçул планне 119,8 процент тултарнă. Чăвашвăрманпромсойуз, Чăвашкуљпромсойуз йĕнĕпе те таварсем кăларасси ÿсех пырать.

Анчах та куллен кирлĕ таварсем кăларасси ĕççынисен таварсем илес пултарулăхĕнчен йулса пырать. Уйрăм участоксем начар ĕçлеççĕ, плана тултарса пымаççĕ. Чылай çĕрте плана тултарасси тумă çăмăлтарах таварсем кăларас йенĕпе пулса пырать. Таварсен пахалăхне лайăхлатас, хакне йÿнетес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Куллен кирлĕ таварсем кăларас плана пур йенĕпе те тултарасси пурнăçа йапăх кĕрсе пырать. Чăвашпромсойуз системи металлран тунă таварсем тăвас йенĕпе 85,2 процент, çăм атăмсем, йоллăксем кăларассине 46,7 процент, галантери таварĕсем кăларассине 64,4 процент çеç тултарнă. Культурă таварĕсем: музык инструменчĕсем, спорт хатĕрĕсем, ачасене выляmalи тата ытти художествăлă таварсем кăларасси те кайа йулса пырать, плана 65,3 процент çеç тултарнă. Уйрăм ертелсем мĕнле ĕçленине илсен çакна куратпăр: Сойуз пĕрлештерекен ертелсен 28 ертел хăйĕн планне тултарса çитермен.

Чăвашкуљпромсойуз системинче сĕтел-пукансем кăларасси йулса пырать. Канашри сĕтел-пукансем тăвакан хапрăк çурçулти плана 52 процент çеç тултарнă. Унта нийуљ уйăхĕнче те ĕçе мĕн чухлĕ те пулин палăрмалăх лайăхлатман. Вăл хапрăкăн лайăх пахалăхлă продукци кăларма пысăк майсем пур. Анчах хапрăк руководителĕсен тимсĕрлĕхне пула вăл майсем усăсăр йулаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Çессинче Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕн руководствине вирлĕн критиклерĕç. Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем куллен кирлĕ таварсем кăларакан предприйатисене йĕркелĕ ĕçлекен тăвасси çине çăмăллăн пăхнă, куллен оперативлă йертсе пырас вырăнне, решенисем йышăннипе ăнланса тăнă.

Районсенчи совет органĕсем те районри промышленнăçа вăйлатас ĕç айăсен кулленхи ĕçĕ тесе шутламаççĕ. Çавăн çинчен калатĕ Йелчĕк райĕçтăвкомĕ стодарнă мастерской тăвассине вăрăма чĕсе пыни. Куллен ...

Парти пурнăçĕ

Парти кандидачĕсемпе тата сочувствуйушчисемпе ĕçлесси

Парти кандидачĕсемпе сочувствуйушчисене политшкулсенче, ПСХ(б)Парти истори кружокĕсенче вĕрентсе тата кулленех поручѐнисем парса ÿстерсе пыни, тăташах пулăшни питĕ кирлĕ ĕç пулса тăни çинчен ПСК(б)Парти райкомĕнче ĕçлекенсем лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Çапах та, хăшпĕр райкомсенче ĕçлекен йулташсем парти кандидачĕсемпе тата сочувствуйушчисемпе ĕçлесси çине çителĕклĕ таран çавранса пăхмаççĕ-ха. Шăмăрша районĕнче парти кандидачĕсем 31 çын, сочувствуйушчисем 22 çын. Парти кандидачĕсем нумайĕшĕ халхи вăхăтра политкружоксенче вĕренмеççĕ, вĕсене партилĕ поручѐнисем питĕ сайра вăхăтра кăна параççĕ. Павă поручѐнисене мĕнле пурнăçласа пынине те йĕркелĕ тĕрĕслесе пыни çук.

Парти кандидачĕсем мĕнле ÿссе çитĕнсе пынипе интересленмен [illegible]

[illegible]

хале те пулсан парти членне кĕ[illegible] саймасть. Парти историпе политграматăна вĕрентекен кружоксенче вăл нихăçан та йĕркелĕ вĕренмен. Хаçат-журналсем вуласа пымасть. Пуçламĕш организаципе парти райкомĕ ăна кирлĕ пулăшу паман, партилĕ поручѐнисем те çук. СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхатĕнче районри колхозсенчи пур активиссем те агитатарсем пулса ĕçлесе пынă, анчах Безрукăва çак ĕçе те йавăçтарман.

Макаравă Йеленă парти кандидатĕнче 1932 çултанпа тăрать. Вăл та политшкулсенче, кружоксенче йĕркелĕ вĕренсе пыман. Халĕ те ниçта та вĕренмест.

Макаравă йулташа партилĕ поручѐнисем памаççĕ, вăл общĕствăла ĕçрен кайа йулса пырать. Парти райкомĕн инструкторĕ Косовский йулташ унпа уйрăм калаçусем туса иртермен, вĕренме пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

П. Ф. Губанов йулташ парти кандидатĕнче 1931 çултанпа тăрать. Халхи вăхăтра Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра ĕçлет. Ăна партилĕ поручѐнисем параççĕ, анчах çав поручѐнисене вăл мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслемеççĕ. Унăн çитменлĕхĕсене вăхăтра палăртса пулăшу паман. Çапла пĕр контроlьсĕр, пĕр пулăшусăр хăй тĕллĕн ĕçлесе, Губанов йулташ ответлăха туйман, дисциплинăна та çухатса пынă.

К. Самойлăв йулташ та парти кандидатĕнче 1931 çултанпа тăрать. 1936—1937 çулсенче, Губанов йулташ пекех, вăл партилĕ дисциплинăна час-часах пăхăнман, [illegible]

[illegible]

мĕн ĕçĕсене туса пыракане (управделами) пулса ĕçлеме илнĕ. Райком çекретарĕсем ун ĕçне кулленех тĕрĕслесе, çитменлĕхсене палăртса, вĕрентсе пыраççĕ. Халĕ Самойлăв йулташ тăрăшса тимлĕн ĕçлет.

Çак примерсем ĕнтĕ парти кандидачĕсемпе сочувствуйушчисене кулленех вĕрентсе, большевикла воспитани парса пыма кирли çинчен калаççĕ. Анчах вăл ĕç кирлĕ пек пурнăçланса пымасть-ха. Кандидатсене тата сочувствуйушчисене вĕрентсе ÿстерсе, парти ретне илес ĕçре йулса пыни курăнать.

Н. Косойкин.

Конкретлă обйазатĕлствăсем

Çак кунсенче Шупашкарти Çыхăну çуртĕнчи комсомол комитетĕнчи комсомолĕцсен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ пулса иртре. Пухури çамрăксем Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри стахановĕцсем пĕтĕм Сойузри çамрăксене чĕнсе калаланине сÿтсе йавреç. Çыхăну çурчĕ çумĕнчи комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем автосавăтри патриотсен чĕнĕвне хаваслăн йышăнчĕç, ПСÇЛКС 20 çул тултарнă уйава çитĕвÿсемпе кĕтсе илме пулчĕç, бригадăпа бригадă, комсомолĕц та комсомолĕц социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç. Комсомол комитечĕн çекретарĕ Ржанăв йулташ Ленинградри Журналистикă институчĕн 2-мĕш курсне заочнă вĕренсе пĕтерме, III-мĕш квартăл финанс планне Çыхăну çурчĕ тăрăх 100 процентран кайа мар тултарма тата Ворошилăвла тĕл перекенсен значокне илме пулчĕ. Халĕ ударлă ĕçлекен А. Йевдокимăв комсомолĕц производствă планне 150 процент тултарма, парти историне вĕренмели кружока [illegible]

[illegible]

пройект хатĕрлеме, Радиоузĕлсен августăн 1-мĕшпе çĕнтаберĕн 1-мĕше хушшинчи паспортизацине кăтартулă ирттерме пулчĕ. Бухгалтерипе автобазă çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацин комсоргĕ Л. Тимофейĕв йулташ çыхăну работникĕсен квалификацине ÿстермели кружок занйатисене йĕркелĕ ирттерме, октаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне кружока çÿрекенсене пурне те лайăх пĕлÿпе вĕрентсе кăларма пулчĕ.

Çыхăну çурчĕ çумĕнчи автобазари шоферсем, телефонискăсем те ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç.

Ăмăртăва хутшăвакансем çĕршыван сыхлăхне хăпартас йенепе те пысăк ĕçсем тума пулчĕç. Ал. Филиппăв комсомолĕц ГСО, ПВХО тата ВС значокĕсене илме; Т. Васильйевă комсомолка 2 уйăх хушшинче ПВХО значкисĕсене 20 çын хатĕрлеме сăмах пачĕ.

Уйрăм комсомолĕцсемпе пĕрле çамрăксен бригадисем те социалисăмлă ăмăртăва анлăн хутшăнчĕç. Суйлавсем вăхăтĕнче кăтартулă ĕçленĕ, производствă программине 175 процент тултарнă çамрăксен телеграф бригади (бригадирĕ Варÿхин йулташ) Лебедев йулташ бригадипе, Уханевă бригади Йашинă бригадипе социалисăмлă ăмăртăва тухса, ПСÇЛКС 20 çул тултарнине чăн-чăн çĕнтерÿсемпе кĕтсе илме пулчĕç.

Тар. Иванов.

Комсомолĕцсем ĕçре

Аманикри (Куславкка р.) пуçламĕш комсомол организацине иртнĕ çултанпа 18 çамрăк комсомола кĕчĕç. Халхи вăхăтра комсомолĕцсем кашни кунах уйра тырă выракансене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ.

В. Ванушков.

Призывниксем—колхоз ударникĕсем

ИШЛЕЙ. Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхозра кăçал призыва кĕмели çамрăксем пур ĕçсенче те хастарлăн ĕçлеççĕ. Владимир Сорокинпа Александр Лукойанăв йулташсем кĕлте кÿне çерте ĕç нормине 200 процентшер тултараççĕ. Лукойанăв йулташ машинăпа тырă вырнă чухне те кулленхи ĕç нормине 130—150 процентшер тултарса пычĕ.

— Херлĕ çара кайса тăван çĕршыва сыхласси вăл—чи пысăк хисеплĕ те ответлă ĕç. Епĕр колхозра тăрăшса ĕçленĕ пекех, Херлĕ Çар ретне кайсан та тăван çĕршыва паттăрăн сыхлама пулатпăр, теççĕ колхозри призывниксем.

Арк. Наумăв.

Пурте хутла пĕлеççĕ

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертелре 17 призывник шутланать. Вĕсем пурте—производствăри стахановĕцсем тата ударниксем. Пурте хутла аван пĕлеççĕ Чылайĕшĕ аероклубри летнăй шкулта вĕренеççĕ.

Призыва кĕрекен çамрăксем [illegible]

[illegible]

перекенсен тата ПВХО 2-мĕш сыпăклă нормине парса значок илчĕ.

Николайĕв йулташ кунпа пĕрлех ПВХО инструкторĕ пулса ĕçлет.

В. Васильйĕв.

Вĕренсе тухрĕç

ÇĔРПУ. 1917 — 18 çулсенче çуралнă çамрăксем Херлĕ Çарăн черетлĕ призывне хаваслансах хатĕрленеççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи хутла сахал пĕлекен 92 допризывник çак кунсенче тулли мар вăтам шкул программипе вĕренсе тухрĕç. Халь ĕнтĕ допризывниксем хушшинче хутла сахал пĕлекен çамрăксем çук.

А. Иванов.

Допризывниксемпе ĕçлемеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Кăçал призыва кĕрекен çамрăксене шута илнĕ чухне хăшпĕр призывниксем трахомпа чирлени палăрнă. Çака ĕнтĕ район çăвкомри çар ĕç пайĕн призыва кĕрекен çамрăксемпе вăйлăн ĕçлемелине кăтартнă. Çапла пулсан та çар ĕç пайĕ призыва кĕрекен çамрăксемпе çителеклĕн ĕçлемест. Çакна пула хăшпĕр призывниксем халĕ те трахомран сывалса çитменха. Çмелов йулташ: сывалма çÿремен допризывниксен районран тухса урăх çĕре ĕçлеме кайнă, тесе çирĕплетет. Анчах та ку тĕрĕс мар.

Çавăн пекех хут сахал пĕлекен допризывниксемпе те ĕç йайăх вырăнта тăрать. Пайан кунччĕнех районра 42 допризывнике сахал вĕреннисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларайман.

Сĕнтĕрвăрринче призыва хатĕрленес ĕçе вăйлатмала.

В. Цыпленкăв.

Епĕр телейлĕ çамрăксем

Пирĕн Совет Сойузĕ—тĕнчери чи тĕреклĕ те хăватлă çĕршыв. Пуринчен те телейлĕ епĕр хаваслă совет çамрăкĕсем. Çак хаваслă пурнăç ĕнтĕ совет çамрăкĕсен паттăрлăхне, хастарлăхне, пултарулăхне çĕклентерсе пырать.

Чи пултарулă, чи хастарлă ывăлхĕрсене совет халăхĕ государствă власĕн аслă органне—Верховнăй Совета суйласа йачĕ. Пирĕн Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрса ĕçлекенсене ССР Сойузĕн, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсенĕ депутата суйларĕç. Депутатсенчен çамрăксем—Коротков, Моисейевă, Антонавă, Фирсавă тата ытти йулташсем те,—вĕсене пĕтĕм чăваш халăхĕ пĕлсе тăрать. Вĕсем государствă ĕçĕнче, предприйатисенче, колхозсен уйхирĕсенче, машинă-трактăр станцисенче, фермăсенче, шкулсенче ĕçлеççĕ.

Епĕ кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăнтăм. Кăçалах мана Шăмăршă районĕнчи Пашăел суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйларĕç. Пирĕн колхозсенче, [illegible]

[illegible]

тăшсем ĕçлеççĕ. Тата ытти ĕçсенче те 18—19 çулхи çамрăксем кăтартулăн ĕçлесе пыраççĕ.

Мана колхозниксем почталйон пулса ĕçлеме уйăрчĕç. Халĕ пирĕн йалти 300 киле валли 400 екземплăр хаçат-журнал килсе тăрать. Епĕ почтальйонра ĕçлеме пуçланă кунранах Кивĕ Чукал йалсоветĕнчи почтальйонпа—Кăçйан Андрейĕн йулташпа ăмăртатăп. Ăмăрту договăрĕнче кашни киле хаçатлă тăвасси, хаçат-журналсемпе çырусене халăха вăхăтра леçсе парасси, ĕçре хамăр пĕлÿлĕхе хăпартса пырасси, заочнă вĕренÿре „отличнă" вĕренесси çинчен çырнă. Халĕ епĕ вăл договăра тивĕçлипех тĕплĕн пурнăçласа пыратăп. Ку ĕçсемсĕр пуçне епĕ йалаках колхозниксене хаçатсем вуласа паратăп. Хамăн пĕлĕве ÿстерес тесе, çыхăну работникĕсен заочнă курсĕнче вĕренетĕп. Ĕç техникине вĕренсе пыни ĕçе тата лайăхрах йĕркелеме май парать.

Почталйонра çÿренĕ чухне ыраш вырнă вăхăтра бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларма пулăшрăм. Стена хаçачĕсем вăхăтра тухаççĕ. Стена хаçачĕсенче кулленхи ĕçсене йĕркелĕн çутатса пыратпăр.

Пирĕн Асанкасси колхозникĕсем епĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине килес умĕн уйра стахановла ĕçлессине нихçанхинчен ытла вăйлăлатрĕç. 1-мĕшпе 4-мĕш бригадăсем ыйулĕн 22-мĕшĕнче, колхозĕпе ыйулĕн 25-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерчĕç.

Епĕ малашне тата лайăхрах кăтартулăн ĕçлеме тăрăшатăп. [illegible]

[illegible]

нĕç; тăван атте Сталин йулташ вĕрентет. Сталин йулташ 1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче каланине епĕ нихăçан та манмастăп. Сталин йулташ каланă пек вĕренсе, ĕçлесе пыратăп.

ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Варварă Журавльовă.

Учебниксем кăларас ĕçе вăраха йама йурамасть

Кăçал Чăваш шкулĕсем валли çĕнĕрен 46 учебник кăлармала. Çитес вĕренÿ çулне çĕнĕ учебниксемпе кĕтсе илес пулать. Шкул ен ĕçĕнче вĕренÿ пахалăхне çÿлĕ пусăма лартасси тĕплĕн йĕркеленĕ паха учебникрен нумай килет.

Çавăнпа та çĕнĕ учебниксем кăларас ыйтăва партипе правительствă вăхăтра тата çивĕччĕн кăларса тăратрĕç. Ку ыйтăва пурнăçа кĕртес ответлăх чи малтан тата пуринчен ытларах çĕнĕ учебниксене хатĕрлесе, вĕсене производствăра туса кăларакан органсене тивет. Вăл органсем—Çутĕç халăх комиссариачĕ, Чăвашгиз тата Полиграфтрест пулса тăраççĕ.

Çак органсем хăйсем тума тивĕçлĕ ответлă ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн çителĕклĕ ĕçленĕ-и-ха? Ку ыйтăва акă мĕнле факт уççăнах тавса парать. Августăн 1-мĕшне пичетрен мĕн пурĕ те 5 учебник çеç тухнă. Вĕренÿ çулĕ çитнĕпе пĕрех. Çентабĕр шкулсен çывăхнех çитсе тăчĕ. Анчах ытти учебниксем хăçан пичетленсе тухасси паллă мар-ха. Вĕсем халĕ Чăвашгизра йе типографинче выртаççĕ. 4 учебник автăрсенчен редактăрсен аллинче те кĕмен-ха.

Учебниксем кăларас ĕç вăраха кайни Çутĕç халăх комиссариатĕнчи бÿрократсен (нарком пулса ĕçленĕ Осипăв) шухăшĕпе Чăвашгизран килнĕ, Чăвашгизрисен шухăшĕпе—Полиграфтрестран.

Паллах, учебниксем кăларас ĕçе Чăвашгиз управльайушчийĕ Васильйĕв, Çутĕç халăх комиссарĕ пулса ĕçленĕ Осипăв, Шупашкарти 1-мĕш №-лĕ типографин директăрĕ Андрейĕв тата Полиграфтрест директăрĕ Никифăрăв йулташсем тивĕçлипе хакламан. Кун пирки Васильйĕв, Осипăв, Никифăрăв йулташсене парти Обкомĕ йенчен вăхăтра асăрхаттарнă пулин те, вĕсем ответлăха тивĕçлипе туйман, ĕçре нимĕнле улшăну та туман.

Чăвашгиз учебниксен алçырăвĕсене производствăна вăхăтра параймасăр тытса тăнă, 1-мĕш №-лĕ типографинче Чăвашгиз панă 13 учебникрен пайана 3 учебник çеç пичетлеме ĕлкĕрнĕ. Полиграфтрест типографине материалсем çителĕклĕ тăратмасăр пынă. Цинкографинче клише тумали хатĕрсем çук пиркийех учебниксем типографинчен тухаймасăр выртаççĕ.

Производстварри активлăх

1937 çулта Тĕрерти (Трак р.) „Пчелкино" колхоз çумĕнче 7 çынтан комсомолăн пуçламĕш организацине организацилерĕç. Унăн комсоргне Павлăв Матвейа уйăрса хăварнă. Çамрăксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе тата организацилĕ ĕçе аван туса пырса, Павлăв йулташ Тĕрер çамрăкĕсен активлăхне ÿстерчĕ, вĕсене колхозри производствăра малта пыракансем пулма пулăшрĕ. Пайанхи куна ку организацинче 17 комсомолĕц шутланать.

Нумай пулмасть Мускав автосавăтĕнчи çамрăк стахановĕцсемпе специалиссен çырăвне комсомол пухăвĕнче сÿтсе йаврĕç. Ленинла комсомол 20 çул тултарнине ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме татăклă обйазатĕлствăсем илтĕмĕр. Колхоз кĕске срукра ыйулĕн 26-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерсе, çуртыррисене вырма тытăнчĕ. Петров, Йефимăв, Павлăв комсомолĕцсем ыраш вырмали нормăна 150 проц. тултарса пынă. Колхозри пĕрремĕш бригадă ыйулĕн 28-мĕшĕнче государствăна çĕнĕ тырă тăратрĕ. Комсомолĕцсем ĕçре ăмăртса ĕçлеççĕ. Хирте кашни звенорах стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. Çав вăхăтрах комсомолĕцсем вăрçă техникине, винтовкă пайĕсене вĕренессипе, ПВХО, ВС значокĕн нормисене парассипе те çине тăрса ĕçлеççĕ. Ку ĕçре вĕсене Осоавиахим организацин пуçлăхĕ—комсомолĕц Макçимăв йертсе пырать. Кăçал комсомолĕцсем хут пĕлменнисене 30 çынна шкулран вĕрентсе кăларчĕç. Колхозниксене ĕç вăхатĕнче 2 хутчен çпектакльлартса пачĕç.

К. Михайлăв.

Чăваш халăхĕн культури ÿсет

Патша правитĕлствин халăхсене пусмăрлас йĕркепе тунă политики уйрăмăнах Атăл тăрăхĕнчи нумай „вак халăхсене" пушшех те йăвăр тивнĕ. Патша чиновникĕсем иртĕхни, йăвăр хырçă-марçă, взйаткă илес йĕрке, йалхуçалăх продуктисене тата тир-сăрана йÿнĕ хакпа илни, пупсен ултавĕпе кулаксен пусмăрĕ, çулсăрлăх, вĕçĕхĕррисĕр хĕн-хур та вырлăх—çакăн пек пулнă Октабĕр революцичченхи чăвашсен тата ытти халăхсен пурнăçĕ.

Акă мĕнле çырнă чăвашсем çинчен ĕлĕкхи етнографсем: „Тĕксĕм те мĕскĕн çав чăвашсен пурнăçĕ. Нумайĕшĕн пурăнмали пÿрчĕсем питĕ чухăн. Улăм витнĕ пÿрчĕсем тĕттĕм те хĕсĕк, хăшĕсем тата тăрăсăр... Малти кĕтесре сĕрĕмленсе хуралнă темле светуй сăнлĕ турăш: ăна кĕл тăвакансем ун çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ.. Çтенасем çинче таракансем шутсăрах нумай, çтена хушăкĕсенче хăнтăласем".

Чăвашсен иртнĕ тĕксĕм пурнăçĕ çинчен чăваш халăхĕ Сталин йулташ патне çырнă çырура питĕ тĕрĕс каланă:

„Çĕр мунча пек пăчă пурнăç
Хĕсĕнет хĕсĕннĕçем.
Чăл та пар тарса пытанкă
Сехри хăпнă етемсем.

Чăнласах упа йĕнни пек
Хура пÿрт ăшĕ тĕттĕм,
Курăнмасть хăмпă тĕнни те,—
Йавăнать кăвак тĕтĕм".

Чăвашсен çеç мар, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсен те (мордвасен, марисен тата ыт. те) пурнăç çакăн пек пулнă.

Патша йĕрки мĕн пур Российă империйĕн территорийĕнче халăха çутта кăларассин тата прогресăн чи хайар тăшманĕ пулнă.

Патша правитĕлстви хăйĕн колонизатăрла тата реакцилĕ политикине сарас майпа „инородцăсен" текен шкулсем уçнă. Чăваш чĕлхине ура та йарса пустармин. Халăхра хут пĕлекенсен хисепне ÿстерессi çинчен, халăха çутта кăларас ĕçе ÿстерессi çинчен сăмах та пулма пултарайман.

Чăвашла литературă кăларассине патша чиновникĕсем урнă пекех хирĕç тăнă.

Шкулăн тĕп вырăнĕнче чиркÿ прихочĕ çумĕнчи пуçламĕш шкул тăнă. Шкулсене йĕртсе пырасси пупсен аллинче пулнă. Пупсем хресчен ачисене вĕрентес ĕçе букварĕн малала йарас мар тесе, мĕн май килнĕ çавна тунă.

„Инородцăсен" училишчи (кунта икĕ çул вĕренмеле пулнă) Йĕпреç районĕнчи Чăрăшкасси йалĕнче 1897 çулта уçăлнă. Шкула пуп хваттерте пурăнакан çуртра вырнаçтарнă. Ун вырăнне халăх вăйĕпе пуп валли урăх, малтанхинчен аслăрах çурт туса панă.

Вăл шкулăн пĕрремĕш учитĕлĕ, вырăнти чиркÿ диакăнĕ пулнă. Малашнехи учитĕлсен составĕ те хут сахал пĕлекен çынсенчен шутланса тăнă.

Шкулти дисциплинă патак çинче пулнă. Учитĕлсем ачасене мĕн алла кĕнĕ çавăнпа хĕненĕ: чĕнпуçпа, туйăпа т. ыт. те. Ачасене мăшкăласа вĕсен мĕн пур пуçарулăхне пусарса пынă.

Çав шкулта чи малтанхи наборта вĕреннĕ Михайлăв, халĕ вăл активлă колхозник, ĕлĕкхи шкул çинчен çапла каласа парать: „Ĕлĕкхи шкулта вĕренни çинчен аса илсен, чун хуралать. Унта пире вĕрентмен, пиртен мăшкăланă çеç. Пире темĕн те пĕр калаçа вăрçнă, мĕн алла кĕнĕ çавăнпа хĕненĕ. Чиркĕве çÿременшĕн шкултан кăларса йарачĕç, йе учителсемпе пупхăйсенне, темĕн те пĕр калаçа вăрçнине тÿсеймен пирки, ачасем хăйсемех вĕренме пăрахатчĕç. Хăшпĕр вĕренекен ачасем хăйсен пĕлÿлĕхне кÿршĕри шкулта малалла тăсма шутларĕç, анчах унта та кунти пекех.

Çак шкула вĕренме кĕнĕ 60—70 çынран çулталăк иртсен: 1901—çулта (пĕрремĕш кăларăм) 3 çын, 1903 çулта 3 çын, 1905 çулта 2 çын, 1907 çулта—4 çын, 1911 çулта—4 çын, 1913 çулта 5 çын вĕренсе тухнă...

Шкула уçнă çултан (1897 çул) пуçласа 1914 çулхи империалисăм вăрçиччен мĕн пурĕ те 13 çын çеç шкултан вĕренсе тухнă. Çапла вара 1917 çулхи Октабĕр революцичен халăх хушшинче хут пĕлекенсен хисепĕ 4 процент çеç шутланнă.

Октабĕрти революци хыççăн епĕр пĕтĕмпех урăхла картинă куратпăр. Ку йалта халĕ тулли мар вăтам шкул пур. Ĕлĕкхи дийакăнсемпе пупсем вырăнне кунта преподавателсен лайăх кадрĕ—педагогикă шкулĕсенче вĕренсе тухнă специалиссем ĕçлеççĕ.

Çавăн пек улшăну пĕр Чăрăшкасси йалĕнче çеç мар, мĕн пур Чăваш республикĕпех пулчĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра çутта кăларас ĕç хуласенче те малта асăннинчен лайăхах пулман.

1914 çулта Шупашкарта çакăн пек шкулсем пулнă: хĕрарăм гимназийĕ—пĕрре, пуп таврашсене вĕрентсе кăларакан училишчă, пуçламĕшĕнчен аслăрах шкул—1, пĕрремĕш класлă пуçламĕш училишчă тата чиркÿ прихочĕ çумĕнчи шкул Çак шкулсенчен: хĕрарăм гимназинче—305 çын, пуп таврашсен училишчинче—129, пуçламĕш шкулсенче вăрçын ачасем 500 çын, хĕрачасем—209 çын вĕреннĕ.

Бÿджетăн çуррине ытла пуп таврашсен училишчишĕн расхутланă Çак вăхăтрах Шупашкарта 17 чиркÿ пулнă. Хуларта пурĕ 5670 çын пурăннă, вĕсенчен дворйансем (потомственнăйĕ, личные) 59 çын, тĕн çыннисем 130 çын, мухтавлă граджăнсем (потомственные и личные) 45 çын, купцасем 22 çын, мещчĕнсем 4650 çын, хресченсем 510 çын тата отставкăна тухнă, йе запасри кĕçĕн чинлă çынсем 236 çын.

Шупашкар халĕ пĕтĕмпех урăхла. Халĕ 23 шкул, вĕсенче 6508 çын вĕренет. Вăл шкулсенче ĕçлекен преподавателсемпе учителсем 524 çын. Çапла ĕнтĕ преподавателсемпе вĕренекенсенех 7032 çын шутланаççĕ, урăхла каласан, Шупашкарта 1914 çулта пурăннă мĕн пур халăх шутĕнчен ытларах.

Кăçалхи çул Шупашкарта 880 вача вырнаçмалăх çĕнĕрен 7-мĕш вăтам шкул, йалсенче 31 шкул тăваççĕ. Чăваш йалĕн сăн-сăпачĕ çеç мар, тата интеллигенци те тĕпренех улшăнчĕ.

Шкулсенчи учитĕлсем, агрономсем, вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем нумайĕшĕ харпăрхăй йал çыннисем, вĕсем хресчен çемйинче çуралса ÿснĕскерсем, шкултан вĕренсе тухаççĕ те хăйсен йалĕнче ĕçлеме пуçлаççĕ. Пирĕн вуншар учитĕл, врачсем, агрономсем, летчиксем, инженерсем вĕренсе тухнă йалсем миçе пулĕ! Миçе çемйере учитĕл, врач тата агроном пур!

Халăха çутта кăларас ĕç пирĕн çĕршывра халиччен курман утăмсем турĕ. Çĕршер пин çамрăксем, рабочисем, хресченсен тата ĕç интеллигенцийĕн ывăль-хĕрĕсем, аслă шкулсенче вĕренеççĕ, вĕсем пĕлÿлĕхе хăйсен аллине çавăрса илсе, совет специалисĕсем пулма хатĕрленеççĕ. Социалисăм обществине тăвакансен кадрне туптаса кăларакан аслă шкулсемшĕн партипе правитĕлствă, мĕн пур совет халăхĕ тăрăшать.

Чăваш çĕршывĕнче ĕлĕк пĕр вăтам шкул та пулман пулсан, халĕ пирĕн республикăра аслă шкулсем 4, вĕсенче 761 çын вĕренеççĕ, пирĕн студентсем пысăк квалификацилĕ çынсем пулма хатĕрленеççĕ. Кунсăр пуçне педагогикăлă тата учитĕлсен институчĕсем çумĕнче 1500 çын харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Республикăра педагогикă училишчисем 8, унта пурĕ 2849 çын вĕренет. Кăçал ку училишчăсем çĕршыв валли 765 педагог параççĕ. Пурне те обйазатĕлнă йĕркепе вĕрентмели шкулсенче 174.443 çын вĕренет. Кăçал вăтам шкулсенчен 1000 çын ытла вĕренсе тухрĕç.

Кунсăр пуçне тата кăçал пирĕн Çутĕç халăх комиссариачĕн ведомствине кĕмен тĕрлĕрен шкулсенчен 1.315 çын вĕренсе тухнă. Совет шкулĕ халь пирĕн çĕршывăн чи айакри кĕтессисенче те пур Наци политикине пурнăçлас тĕлĕшпе Ленин хушса хăварнă сăмахсене çирĕп тытса пынă май, совет шкулĕсенче вĕрентесси тăван чĕлхепе пулса пырать.

Пирĕн совет студенчĕствин чи пысăк пайĕ рабочи класпа тата хресченсемпе çирĕппĕн çыхăннă. Çавăн пек çывăх та уйрăлми çыхăну тытакан студентсем тĕнчере урăх нимле çĕршывра та çук Пирĕн совет студенчĕ массă хушшинче активлă общчĕственник, вăл коммунисăмшăн кĕрешес ĕçе чĕререн парăннă.

Пирĕн çĕршывра ачасемшĕн, шкулсемшĕн тата учитĕлсемшĕн партипе правитĕлствă, мĕн пур совет общчĕственнăçĕ сталинла тăрăшать. Халăх учитĕлĕ урăх нимĕнле çĕршывра та пирĕн ССР Сойузĕнчи пек çÿлти вырăнта тăмасть. Пирĕн совет учителстви—чи хăватлă культурăлă вăй пулса тăчĕ.

Чăваш республики культурă ÿсĕмĕ йенĕпе пысăк çитĕнÿсем турĕ. Республикăра: 610 вулав çурчĕ, колхоз клубĕсем 167, районри культурă çурчĕсем 23, хĕрлĕ кĕтессем 441, библиотекăсем—йалсенче 28, районсенче 25, унта мĕн пурĕ 210.242 кĕнеке.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлава хатĕрленнĕ вăхăтсенче çак учрежденисем çумĕнче 3070 кружок ĕçлерĕ, вĕсем пурĕ 4003 доклад, 239 лекци, 906 пултарулăх вечĕрĕсем, пĕрлешсе радио итлессине 4086, спектакльсем 298 туса ирттернĕ, кунсăр пуçне 837 кинокартинă кăтартнă, 900 стена хаçачĕ кăларнă.

Художĕствăлă пултарулăх йенĕпе пирĕн республикăра: хор кружокĕсем 207 ĕçлеççĕ, вĕсенче 5013 çын членра тăраççĕ, струнăлă тата шăвлă оркестрсем 84, вĕсенче членра 969 çын, духовой оркестрсем 21, ку шутран 2 колхозсенче, 19—районсенчи культурă çурчĕсен çумĕнче, вĕсенче 314 çын хутшăнса ĕçлеççĕ тата драмкружоксем 316, вĕсем иртнĕ çул лартнă постановкăсенче мĕн пурĕ 443000 çын пулнă. Колхоз театрĕсем 3, вĕсем пĕр çулталăкра 800 спектакль лартса кăтартнă.

Пирĕн çĕршывра рабочисен тата хресченсен класĕ тĕпренех улшăнчĕ. Пирĕн çĕршыв ĕлĕкхи „халăхсен тĕрминчен" пур нацисем те пĕр тăван пек пĕр шухăшпа килĕштерсе пурăнакан çĕршыв пулса тăчĕ. Çурмакустарлă савăтсем вырăнне икĕ сталинла пилĕкçуллăх çитĕнтерне хăватлă социалисăмлă хапрăк-савăтсен корпусĕсем гигантла курăнса лараççĕ. Хресченсен ансăр та типсе хытнă анисем вырăнне, колхозсен куçпа виçсе илейми анлă уйхирĕсем сарăлса выртаççĕ.

Хĕрарăмсене ирĕке кăларни, вĕренне çынсен шучĕ хăвăртăн ÿсни, халăх хушшинчи талантсене малтан-мала кăларса пыни, телейлĕх, хаваслăх—çаксем пурте епĕр пурăнакан, епĕр туйакан, пирĕн хăмăла хавхалантаракан пурнăç пулаççĕ.

Чăваш халăхĕ ССР Сойузĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле Ленин—Сталин наци политикине кулленех пурнăçласа пырса, шовинисăмпа тата буржуалă националисăмпа хирĕç хайарлăн кĕрешсе, формă тĕлĕшĕнчен нацилĕ, социалисăмлă содержанилĕ культурă туса хучĕ.

А. Суданов.

Йапони провокацийĕ пирки йут çĕршывсенче мĕн калаççĕ

Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи ĕçсем çине йут çĕршывсенчи пичет халь те пысăк тимлĕхпе пăхать.

Румынири пĕтĕм хаçатсем Литвинăв йулташ Йапони посолĕпе Сигемицупа калаçни çинчен пĕлтерÿсем пичетлеççĕ.

„Лумеа Романеаска" хаçат çапла çырать: „Германипе Итали Йевропăра хăйсен агрессивлă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес шутпа, Совет Союзĕпе Йапони хушшинчи конфликтпа усă курма хăтланса пăхĕç. Германипе Итали: Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕç пур вăхăтра ССР Союзĕ Йевропăри событисем çине кирлĕ пек пăхса тăраймĕ, тесе шутлаççĕ пулсан, вĕсем пысăк йăнăш тăваççĕ. Совет Союзĕпе Йапони хушшинчи конфликт кирек мĕнле пысăк пулас пулсан та, ССР Союзĕ хăйĕн Йевропăри обйазательствисене йалан пурнăçа кĕртме пултарать, вăл çав терийех вăйлă. Фашисла блокăн шанчăкĕсем малтанах арканса пĕтнĕ".

Чех социал-демократĕсен „Право Лиду" йатлă хаçатĕнче Йапони вĕçĕмрен вĕçĕме ĕçлесе ССР Союзне хирĕç вăрçă хатĕрленине, вăл вăрçăра Совет Союзĕн Çĕпĕрти территорине туртса илме ĕмĕтленнине тĕплĕн пăхса тухнă. Çапах та, Германипе Итали хăй çине хытă хĕсĕрлесен халĕхи вăхăтра ССР Союзне хирĕç вăрçăпа тухма хăйаймĕ те темеле, тесе палăртать хаçат. Совет Союзĕ канăçлăн, çав вăхăтрах вăйлăн та çирĕппĕн ĕçлени ĕнтĕ вăл хăватлă пулнине, вăл хăй вăйне шаннине пĕтĕм те лайăх кăтартса парать. Берлин—Рим—Токио тĕнĕлĕ вара хăйĕн канăç çуккине, тÿсĕмлĕх çуккине палăртать.

Китайри „Синьхуажибао" хаçат çапла çырать: „Заозерная (Чанкуфын) высота совет территорийĕн пĕр пайĕ пулса тăрать, йăна Хунчунра тунă вырăс-китай договăрĕпе ĕнентерÿлĕ кăтартса панă. Ку факта Йапони милитарисĕсен нимĕнле провокацийĕ те тĕнчерен пытарма пултарас çук. Йапонецсем высотăна туртса илме хăтланса пăхрĕç пулсан та, Хĕрлĕ Çар, совет территорине йăнăçлăн сыхласа, йапонецсене кăкласа ывăтрĕ. Провокацисем малашне те пулса пырсан, йапонецсем Совет Союзĕн çĕрĕсем çине çĕнĕрен кĕрсен, вĕсем, паллах, тивĕçлĕ отпор туйăĕç, никăм пырса тĕкĕнеймен совет чиккинче вĕсене йалан тивĕçлĕ отпор панă".

(ТАСС).

Рабочисемпе штурмовиксем хушшинчи тытăçусем

Германирен пĕлтернĕ тăрăх, Сар облăçĕн хăшпĕр вырăнĕсенче тата Пфальцра çар укрепленисен строительствине мобилизациленĕ рабочисемпе строительствăра надсмотрщиксем пулса ĕçлекен штурмовиксем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Цвейбрÿккен—Ландау линийĕ пĕр участкинче, рабочисем çимелли аннăт, казармăсенчи йĕрке начарпăн тата ĕçсукçи сакалшăн тăрăхса штурмовиксен ушкăнĕ çине тапăннă та, вĕсенчен пĕрне вĕлернĕ. Участкăна пынă Гестапо отрйачĕ (Германири вăрттăн полици) темиçе çынна арĕсленĕ. Тепĕр участкăра вĕлернĕ штурмовикăн виллине тупнă. Гестапо рабочисене арĕсленĕ.

(ТАСС).

Советăн иккĕмĕш велотурĕ

Августăн 6-мĕшĕнче Мускавра Совет Союзĕн иккĕмĕш велотур стартне панă.

Ăмăртусене 170 çын хутшăннă. Шоссе тата ахаль çулсем тăрăх вĕсен 3.200 километр каймала—иртнĕ çулта пĕрремĕш велотурта пулнисем чупса иртнĕ çултан 700 километр ытларах. Гонщиксем Мускаври велосавăт туса кăларнă машинăсемпе çакăн пек маршрутпа кайаççĕ: Мускав—Кийĕв—Минск—Ленинград—Мускав.

Велотурăн финишĕ августăн 29-мĕшĕнче Мускавра пулать.

(ТАСС).

Ĕçкунĕ пуçне 30-шар тенкĕ

Сабирабад районĕнчи (Азербайджан ССР) колхозсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен шучĕпе укçан тата натурăпа авансcем парса пĕтереççĕ. Колхозниксем ĕçкунĕ пуçне вăтам шутпа 4—7-шер тенкĕ илнĕ.

„Октябрьская революция", „Заря Востока" колхозсем, Ленин йачĕпе, Кирăв йачĕпе тăракан колхозсем кăçалхи çул ĕçкунĕ пуçне 20-шер тенкĕ параççĕ, Орджоникидзе йачĕпе тăракан колхоз—30-шер тенкĕ парать.

(ТАСС).

Виноградăн пысăк тухăçĕ

Вăтам Азири республикăсен пур районĕсенче те виноград тата пухас ĕç пырать. Виноград тухăçĕ лайăх, нумай колхозсенче—отличнă.

Азербайджан, Армени тата Абхази колхозĕсемпе совхозĕсем виноград пухма тытăннă. Крымра, Кавказăн çурçĕр йенчи пайĕнче тата Ростов облăçĕнче те виноградсем пиççе çитеççĕ. Кунта тухăç çавăн пекех пит лайăх.

Дагестан АССР Республикĕнчи Дербентск районĕнче те тухăç пит чаплă. Колхозсем вăтам шутпа гектар пуçне 10-шар тоннă виноград пухса илме шутлаççĕ. Нумай колхозсенче гектартан 13—15-шер тоннă виноград илессе шанаççĕ.

(ТАСС).

Тырăсене вырса пуçтарни

Пучахлă культурăсене 40.893 пин гектар вырса пуçтарнă

Ийулĕн 31-мĕшне Союз тăрăх пучахлă тырăсене 40.893 пин гектар вырса пуçтарнă—плана 42,2 процент тултарнă. Колхозсем плана 46,4 процент, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем 42 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем 39 процент тултарнă.

Тырăсене вырса пуçтарас ĕç пĕлтĕрхинчен хăвăртрах пырать: пĕлтĕрхинчен 4 104 пин гектар ытларах вырнă.

Хăшпĕр районсенче тырăсене вырса пуçтарассипе кайа йулаççĕ. Сăмахран, Украинăри колхозсем плана 84 процент тултарнă, пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне плана 92 процент тултарнă пулнă. Пĕлтĕр августăн 1-мĕш тĕлне тырăсене вырса пуçтарса пĕтернĕ Крым халĕ плана 94 процент çеç тултарнă. Белоруççи чылай кайа йулать. Хăшпĕр районсенче комбайнсемпе начар усă кураççĕ. Нумай районсенче тырра вырнă хыççăн çийĕнчех çапмасăр тăраççĕ. Çавăн пекех тата вырнă кĕлтене уй-хиртен турттарса кĕрессипе те кайа йулса ĕçлени сисĕнет.

(ТАСС).

„Авиаци кунĕнче"—августăн 18-мĕшĕнче Мускаври Косарĕв йачĕпе тăракан aероклубри спорт отрйачĕн пилочĕсем „УТ—1" самолётсем çинче ушкăнпа вĕçсе тĕрлĕ фигурăсем туса кăтартаççĕ. Халĕ вĕсем çав вĕçеве хатĕрленеççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Спорт отрйачĕн командирĕ Н. Н. Виктăрăв (сулахайра) пилотсене мĕнле вĕçмелли çинчен вĕрентет.

Межуйĕв фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото)

Хурт-хăмăр ĕрчетеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районти колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çулран çулах вăйланса пырать. Колхозсенче пыл хурчĕсене ĕрчетес тата вĕсене пăхас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе иртнĕ хĕлте Куславкка районĕнчи Çатракасси йалĕнче йатарласа курс туса иртернĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчен вăл курсран 12 çын вĕренсе тухнă. Кунсăр пуçне районра кашни çулах пыл хурчĕсем пăхакансен курсĕсене туса иртернĕ.

Районти 96 колхозран 70 колхоз пыл хурчĕсем усраççĕ. Вĕсенче мĕн пурĕ 1500 вĕлле. Наратчаккинчи „Хĕрлĕ Сормăвă" колхоз утарĕ районта чи лайăх утар шутланса тăрать. Унта халĕ 280 вĕлле хурт пур. Колхоз иртнĕ çулта ытти колхозсене 100 вĕлле, кăçал 50 вĕлле сутнă. Хуртсене пăхнă çĕрте Лебĕдĕв, Китайĕв, Арçентйĕв тата Никифăрăв колхозниксем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене лайăх пĕлеççĕ, хуртсене йуратса кирлĕ пек пăхаççĕ. 1934—1935 çулсенче Лебĕдĕв лайăх ĕçленипе 6-шар тоннă пыл илнĕ. 1934 çулта Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пылхурт кантурĕ „Хĕрлĕ Сормăвă" колхоза пыл хурчĕ ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿ тунăшăн мухтав граматти, Лебĕдĕва пыл хурчĕ ĕрчетес ĕçре тăрăшса ĕçленĕшĕн 100 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Колхоз кăçал та пыл нумай илет.

Пĕчĕк Маклашкинри „Хĕрлĕ Çар" колхозăн 100 вĕлле пыл хурчĕ пур. Вăл кăçал 2 тоннă пыл илнĕ, хĕшпĕр рекордлă вĕллесенчен 80 килограмшер пыл илнĕ.

Амачкинăри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозăн 76 вĕлле пур. Кăçал кашни вĕллерен вăтам шутпа 20-шер килограм пыл илнĕ. Шуркассинчи Кирăв йачĕпе тăракан колхозăн 40 вĕлле. Кашни вĕллерен 30-шар килограм пыл илнĕ.

Районти ытти колхозсем те кăçал нумай пыл илеççĕ.

Г. Çмирнов.

Ачасен çулахи варвитти чирĕпе кĕрешесси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмала

Ийуль, август, çентăбĕр уйăхĕсенче варвитти чирĕсем—дизинтери тата диспепси вăйлăн сарăлаççĕ.

Ийулĕн йулашки кунĕсенче пульницăсене çÿрекенсенчен çÿрри ытла асăннă чирсемпе чирлени палăрчĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи сывлăх пайĕ тата район пульницинчи медработниксем ку чирсемпе кĕрешессине анлăн пуçарса йачĕç. Чурачăк пульницинчи работниксем дизинтери саралнă йалсенче—профилактикăлă ĕçе пуçарчĕç. Кашни колхозра пухусем туса ăнлантарнисĕр пуçне, дизинтерирен сыхланма кирлĕ ĕçсене туса иртерчĕç. Кун хыççăн чирлекенсен шучĕ 70—80 процент таран чакрĕ. Ку ĕçе халĕ ытти йалсенче те туса пыраççĕ. Çĕрпÿ районĕ тăрăх çулахи чирсемпе кĕрешес ĕç аван пырать. Çав вăхăтрах Шăхасан тата Трак районĕсенче дизинтерипе тата диспепсипе кĕрешес ĕç чăтма çук йапăх.

Акă, ийулĕн 20-мĕшĕнче Çĕрпÿ районĕнчи Чурачăк пульницине Шăхасан районĕнчи йалсенчен дизинтерипе чирленисем пычĕç. Анчах Трак тата Шăхасан районĕсенчи сывлăха сыхлав пайĕсенче ĕçлекенсем тата медицинă работникĕсем колхозсенче пулмаççĕ, çулахи чирсемпе кĕрешмеççĕ.

Тракри пульницăра çурт çук тесе стационара хупнă.

Районри медицинă работникĕсене Сывлăх сыхлав Халăх Комиссариачĕн асăрхаттармала. Çулахи варвитти чирĕсемпе кĕрешес ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартмала.

Чурачăк пульницинчи студент-практикант Михайлăв.

Аслă шкулсенчи пĕлÿ тĕрĕслевĕсем

Чăвашсен педагогикă институчĕпе учительсем хатĕрлекен института кăçалхи вĕренÿ çулĕнче 210 çын илмеле. Пайанхи куна института кĕме 273 çын зайавлени панă. Вĕсем хушшинче вăтам шкула отличнă пĕтерсе аттестаци илнисем 7 çын. Вĕсене аслă шкула пĕлÿ тĕрĕслевĕсĕрех илеççĕ. Отличниксем пурте пекех хăйсене физикăпа математика факультетне йышăнма ыйтнă.

Анчах учительсен институтне вĕренме кĕрес текенсен йышĕ сахалтарах. Кунта пурĕ 360 çын илмеле. Зайавленисем пайана 243 çеç. Халĕ институтра пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пыраççĕ. Пĕлÿ тĕрĕслевне 112 çын килнĕ. Вĕсем математикăпа, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе, литературăпа, политграмотăпа тата географипе пĕлÿ тĕрĕслевĕсенче пулаççĕ.

Августăн 5-мĕшĕ тĕлне 9 çын пур предметсемпе те пĕлÿ тĕрĕслевĕсем тытса, института кĕме тивĕç илнĕ, Вĕсенчен Быкăвпа Сивов йулташсем (Ишекри вăтам шкултан) пĕлÿ тĕрĕслевĕсене пур предметсемпе те отличнă тата хорошо панă.

В. Иванов.

Сывлăха упрасси çинчен калаçусем иртеретпĕр

Йĕпреç. Хурамалти сывлăх пункчĕ колхозниксен сывлăхне упрассинче кирлĕ пулăшусем парса тăрать. Вăл уйри тыр пулсене пуçтарса кĕнĕ çĕре те хутшăнса ĕçлет. Сăрăмсăр чирленĕ колхозниксене çавăнтах кирлĕ пулăшу парать Горбуновăпа Павлăвă трахсестрасем трахомпа чирленĕ колхозниксемпе колхозницăсен куçĕсене уйăха тухса емелleççĕ, вĕсемех бригадăсенче куç чирĕсемпе вĕсенчен сыхланасси çинчен калаçусем туса иртереççĕ. Сывлăх пункчĕ, колхозниксем тырă вырма тухнăранпа варвиттирен сыхланмалли майсем çинчен колхозниксем хушшинче икĕ калаçу туса иртернĕ.

Хурамалти сывлăх пункчĕ иртнĕ çултанпа трахом чирĕпе чирленисене 137 çынна сыватса çитернĕ. Трахомпа чирленĕ ачасен куçĕсене сыватма йатарласа уйрăм пÿлĕм уйарнă.

Д. Арçентйĕв

Тивĕççĕр йĕрке

Шăхасан районĕнчи „Красный луч" колхоз хорĕ 4 çул ĕçлет ĕнтĕ. Хора Кузнецов йулташ йертсе пырать. Вăл 1937 çулта халăх творчестви çурчĕ çумĕнче колхоз хорĕсен руководителĕсене хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă.

Хор çултан çулах ÿссе пырать, ăна кÿршĕри колхозсем те пĕлсе тăраççĕ. Хор татах та çирĕпленме пултаретчĕ, анчах унăн ĕçне чарса тăракансем пур. „Красный луч" колхоз председателĕ Алекçейĕв хора пĕтерсе лартас тесе, сахал мар тăрăшнă. Алекçейĕв хор йатне йарать, унта йурлакансем çинчен елексем сарать.

Пуçламĕшпе вăтам шкулти работниксен обкомĕпе халăх творчестви çурчĕ пуçарса йанипе, ийулĕн 18-мĕшĕнче Канаш хулинче вĕренекенсемпе вĕрентекенсен тата колхозниксен илемлĕ пултарулăхне кăтартас пирки смотр пулса иртрĕ. Унта „Красный луч" колхоз хорĕ те пымалаччĕ.

Алекçейĕв хăйĕн колхозĕнчи хора Канаша, смотра йаман, хор руководителне Кузнецов йулташа ухмах вырăнне хурса хăтăрса тăкнă, Йегор Волкăвăн шăпăрне çурса пĕтерессипе йунанă.

Алекçейĕв колхозниксене йурлама кăна мар, йурă итлеме те чарасшăн пулас. Тырă вырнă вăхăтра кунта чух хор кашни бригадăрах концертсем парасшăн пулнă, анчах Алекçейĕв чарнă.

Ф. Ландышĕв

Футбол

Темповĕцсен çĕнтерĕвĕ

Мускаври „Родина" командипе тата Саранскри „Динамо" командийĕ выльса йанă хыççăн, Шупашкарти „Темп" команди çинчен урăхла шухăшлама пуçларĕç. Темповĕçсем текех никăш хулари командăна та çĕнтерме пултарас çук, тетчĕç. Çак шухăша темповĕçсем августăн 5-мĕшĕнче сирсе йачĕç. Ку кун вĕсем Ижевскăри „Зенит" футболисĕсемпе тĕл пулса выльарĕç. Вăйăн малтанхи таймĕнче „Темп" команди хăнасен алăкне 2 мечăк кĕртрĕ. „Зенит" футболисĕсем пĕрре те кĕртеймерĕç. Анчах иккĕмĕш таймра хăнасем 2, темповĕçсем 1 мечăк тапса кĕртрĕç. Вăйă 3:2 шутпа Шупашкарсем çĕнтерипе пĕтрĕ.

Иртнĕ çулта „Зенит" команди „Темп" командине 3:0 шутпа çĕнтерчĕччĕ.

Августăн 6-мĕшĕнче Ижевск команди Шупашкарти „Сборнăй" командăпа выльарĕ. Вăйă 1:1 шутпа пĕтрĕ.

ГСО значокĕ илчĕç

Тойкилтĕ йалсоветĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" колхозра (Тутаркас районĕ) 22 çамрăк ГСО нормине парса значоксем илчĕç. Халĕ вĕсем ĕçре иккĕ-çиккĕ пулсан колхозниксене малтанхи пулăшу пама пултараççĕ.

М. Григорйĕв

Пулни-иртнисем

● Мускаври театр институтĕнче вĕренекен студент Г. Д. Сергейĕв ийулĕн 21-мĕшĕнче Шупашкар хула сачĕнче А. Дунайĕва хĕнесе пĕтернĕ. Çакăн пек киревсĕр ĕç тунăшăн Сергейĕва ответ тыттараççĕ.

○ РАСТРАТЧИК. А. Н. Йандукин кăçалхи ийунĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа ийулĕн 13-мĕшĕчен Канаш—Шупашкар чугунçул строительствинче 1-мĕш участкăри столовăй пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Вăл çав вăхăт хушшинче 1410 тенкĕ растратă тунă. Кунсăр пуçне 9 тенкĕ те 50 пус тăракан кăлбассине 13 тенкĕ те 50 пуса сутнă. Йандукина арĕслесе суда панă.

○ ПУШАР. Çак кунсенче Куракинă йалĕнче (район центрĕ) А. С. Плешчейĕв килĕнчен вут тухса, виçĕ кил пĕтĕмпех сунса кайнă. Пушар—пĕчĕк ачасем вутпа выльанинчен тухнă.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн августăн 6-мĕшĕнчи номĕрĕнче „Хасан кÿлли йайонĕнчи тытăçусем пирки" йатлă информацире, корректăрсен айăпĕпе, пĕр кÿрентерекен йăнăш кайнă. 2-мĕш абзацри виççĕмĕш предложенине çапла вуламала: „Инцидент" çав ĕççене пула кăна тухса тăнă тата вĕсем пулман пулсан, инцидент та пулман пулĕччĕ".

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Шупашкар хула совечĕн пленумĕ

Августăн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче Шупашкар хула совечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра, депутатсемсĕр пуçне, хула совечĕн секцисен, депутат групписен членĕсем, урам комитечĕсен активĕ те пулчĕç.

Пленумра хула совечĕн депутачĕ П. И. Калининпа йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен Пĕрремĕш Сессийĕсен ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Пленум Верховнăй Совечĕсен сессийĕсем йышăннă решенисене пĕтĕмпех ырласа постановлени йышăнчĕ.

Унтан пленум хулара капитальнăй строительствă мĕнле пыни çинчен хула совечĕн председателĕн заместителĕн Матросăв йулташăн докладне итлесе сÿтсе йаврĕ. Капитальнăй строительствă ĕçĕ хулара çаплах кайа йулса пырать ха. ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кивĕ руководстви—Сантăв çăмăхĕпа пит нумай туса пама пулнă, анчах мĕн каланине пурнăçа кĕртес тесе нимĕн те туман. ЧАССР Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулнă тата хула совечĕн председателĕ ĕçĕсене туса пынă Каплин й. коммуналлă çуртсен строительствипе хулари благоустройствă ĕçĕнче нимĕн те пулăшман. Çавна пула хула совечĕн çĕнĕ руководстви кăçал капитальнăй строительствă ĕçĕсене пысăк йăвăрлăхсене çĕнтерсе туса пымала килет.

Матросăв йулташ докладĕ тăрăх тухса каланă йулташсем (Лÿминарскайа, Марковкин, Игнатйĕв—стройтрест инженерĕ, Охотникăв, Йакăвлĕв урам комитечĕн председателĕ, Корйагин—архитектăр т. ыт. те) капитальнăй строительствă ĕçĕнчи çитменлĕхсене çирĕппĕн критиклерĕç.

Пленум хула совечĕн президиумне тата хулари коммуналлă предприйатисен пуçлăхĕсене (Водосвет — Никулин, пурăнмалли çуртсен управлени — Соловйов) капитальнăй строительствă ĕçĕнчи, пурăнмалли çурт-йĕрсене йусас ĕçри тата хулари благоустройствă ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, ĕççене вăхăтра туса çитерме хушса постановлени йышăнчĕ.

Виççĕмĕш ыйтупа пленум хула совечĕн бÿджечĕ 1938 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче мĕнле пурнăçа кĕни çинчен Калиновскайа йулташăн (хула совечĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ) докладне итлесе сÿтсе йаврĕ.

Хула совечĕн бÿджетне 1938 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче доход пайне—54 проц., расход пайне—43,4 проц. тултарнă. Бÿджетăн доход пайне çителĕклĕ тултарнă пулин те, хватер йаракансенчен, кустарсенчен, возчиксенчен саккун тăрăх илмелли укçасене халĕ те пухман. Коммуналлă предприйатисен—Водосвет, перевоз, автогужобоз—тупăшĕнчен бÿджета уйăрса илмелли укçа-тенкĕ бÿджета кĕрессин пайăн пулса пырать. Оборотран илекен налог йенпе те недоимкăсем пулаççĕ (Маслопром, Нефтесбыт базисем). Кожупрăж, „Кооператăр", „Пекарь" ертелсем промфинпланĕсене тултармаççĕ, çавна пула вĕсенчен илмелли тупăш бÿджета кĕмест. Кустарсене пурне те палăртса налог хуман, арендă тата хватер укçине вăхăтра пухмаççĕ. Тавар çаврăнăш планне тултарманнипе тата государствă налогĕсем тăрăх, вырăнти налогсем тăрăх та недоимкăсене шыраса илменнипе пула Госбанк кантурĕн кассĕ пайне тулмест,—вăл ĕнтĕ тĕрлĕрен йăвăрлăхсем тусах хурать.

Бÿджетăн расход пайне тултарас ĕçре те çитменлĕхсем пур.

Ку ыйтупа пленумра тухса каланă йулташсем (Степанăв—хулари суту-илÿ пайĕ, Петров—сыхăну управлени, Кудрйашовă—финанс секцийĕ, Большаков—хулари сывлăха сыхлав пайĕ) бÿджета тултарас тата укçа-тенкĕ пухас ĕççене лайăхлатма сĕнÿсем пачĕç.

Пленум бÿджет ĕçĕнчи тата укçа-тенкĕ пухас ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме кăтартса постановлени йышăнчĕ.

* * *

Йулашки ларура пленум Йапони военщинин пирĕн Совет Союзĕн чиккинче провокацисем туни çинчен пĕлтернине итлесе резолюци йышăнчĕ. Пленумра пулнисем: Йапони военщинине тивĕçлĕ отпор панă паттăр пограничниксене хĕрÿллĕ саламлаççĕ, вăрçă вутне чĕртесшĕн çунакан провокатăрсене вĕçĕмсĕр тăрăхаççĕ, партипе правительствă, пирĕн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ пĕрре чĕнсенех тăшмана çĕршыва хĕкĕрпа сыхлама хатĕрри çинчен калаççĕ.

Золотников.

МЕТРИЧЕСКИ ВИÇЕСЕН

Шупашкарти тата Çĕрпÿри маçтерскойĕсем

тимĕр-тăмăртан тунă йапаласене, машинăсене йусама

ЗАКАЗ ЙЫШĂНАÇÇĔ

Маçтерскойсенче ĕçleme слесăрсем, тимĕрçсем, мăлатук çапакансем кирлĕ. Шупашкарта ĕçleme аслă бухгалтĕр кирлĕ.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Ленина, 3 или Цивильск, бывший весозавод.

2—2

Шупашкарти строительствăна тĕрлĕрен квалификациллĕ инженерсем, економиссем-плановиксем, опытлă снабженец, çавнашналах опытлă йурист кирлĕ

Çак адрĕспе пымала: Чернышевская, 8. Отдел кадров.

Почтăпа йарас пулсан (пĕрле кĕскен автобиографи кирлĕ) почтовый ящик 12.

3—3

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатне

икĕ машинисткă, завхоз тата дворник

кирлĕ

Финанс Халăх Комиссариатне пымала

И. П. К. К. Н. О-ра екстерн йĕркипе вĕренекенсене пĕлсе тăма

Пĕтĕм Союзри Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕн положенийĕнче кăтартнă тăрăх И. П. К. К. Н. О. малашне екстернатсене вĕрентес ĕçпе ĕçлемест.

Çулахи çессине килмесĕр йуханă екстернатсен, йе Чăвашпединститут çумĕнчи харпăрăн тĕллĕн вĕренмели (йе екстерн йĕркипе вĕренмели) сектăра куçас ĕçе йĕркелесшĕнисен, хăйсем малашне вĕренес пирки Чăвашсен И. П. К. К. Н. О-не харпăрăн тĕллĕн вĕренмели сектăра куçарма ыйтса зайавлени памала. Зайавленисене 1938 çулхи августăн 20-мĕшĕччен кайа йулмасăр памала.

Чăваш И. П. К. К. Н. О.

2—1

Союзоргучотăн

Вĕренÿ-Учот-Економикă Комбиначĕн

Чăваш республикĕнчи филиалĕ Шупашкарта пурăнакан граждансене

Курссене çак группăсем тăрăх йышăнать

Счетоводсен (9 уйăхлăх курс).
Бухгалтĕрсен (14 уйăхлăх курс).

Курс пĕтернисене учрежденисенче тата предприйатисенче вырăн йышăнма права паракан квалификацилĕ ĕнентерÿ параççĕ.

Вĕренесси тÿлевлĕ.

Кăçкине производствăран уйăрăлмасăр вĕренмелле.

Зайавленисем августăн 22-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
Занятисем çентăбĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.
Справкăсене кашни кунах филиал çуртĕнче илме пулать.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Канашская, 16, с 10 до 16,5 часов ежедневно, кроме общих выходных дней.

1—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 421.
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 865. 3